# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

23 (9058) № * Эрнекун, 2023 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 16-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Хаксем

## Сĕт хакĕ пиркиех

Халăхран сутăн илекен сĕт хакĕ пĕчĕк пулни, паллă ĕнтĕ, ял çыннине пăшăрхантармасăр пултараймасть. Ахальтен мар ĕнтĕ эрнесеренхи правительство канашлăвĕнче ку ыйту патне татах таврăннă.

Республика Пуçлăхĕ Олег Николаев хăйĕн телеграм-каналĕнче палăртнă тăрăх, сĕт хакĕ пĕчĕкки çынсене хумхантарать. Çакă чи малтанах муниципалитет йĕркеленĕвĕсен ертӳлĕх командисем ĕçлесе çитерейменнипе çыхăннă. Хаксем чакни пĕрремĕш çул кăна мар ĕнтĕ сисĕнет. Çакна тăнăçлатма тĕрлĕ мера йышăнни пулнă. Вăл шутра сĕте сутăн илмелли чи пĕчĕк хака административлă майпа çирĕплетесси пирки те сĕнӳсем пулнă. Анчах та вĕсем ниепле те хăйсен уссине парайман. Паллă ĕнтĕ, шанчăклăраххи – экономика пулăшăвĕн мелĕсем, вăл шутра бюджетран уйăракан укça-тенкĕ пулăшăвĕ. Кун пирки те сăмах пулнă канашлура. Уйрăммăн илсен, харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекенсене – килти хушма хуçалăха аталантаракансене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерни пирки.

«Ĕнесене тытса усрама каякан расхутсене саплаштарма эпир туса панă майсемпе кашни округра мĕнле усă курнине цифрăсем лайăх кăтартса параççĕ. Пулăшăвăн çак майĕсем сĕт хакĕ чакнине компенсацилеме те, çавăн пекех пуçламăш тапхăрта харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекенсене те пулăшма пултарĕç», – çапла шутлать Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев.

Сăмах акă мĕн пирки пырать. Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекенсене пуçламăш тапхăрта пурлăхпа техника бази йĕркелеме сахалах мар укçа-тенкĕ кирлĕ. Сĕте сутăн илмелли хаксем чакса пынă чухне вара çавна валли укçа-тенкĕ тупма çăмăлах мар. Кун пек чухне шăпах ĕнтĕ бюджет субсидийĕсем пулăшма пултараççĕ. Харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекенсем пирки асăннă май, Олег Николаев çавна аса илтерчĕ. Вĕсене пулăшма тĕрлĕ май туса хатĕрлесçĕ. Уйрăммăн илес пулсан, шкулти апатланăва централизацилесси. Çакă вĕсемшĕн хăйсен продукцине, чи малтанах сĕт сутассине çăмăллатĕ. Черетре – социаллă учрежденисенчи, сывлăх сыхлавĕнчи апатлану. Маларах каласса таталмаллине асăннă республика Пуçлăхĕ.

Муниципалитетсен пуçлăхĕсене вара пур йышши пулăшу мелĕ пирки те çынсене ăнлантарса пама хушнă. Çапла майпа харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтерекенсен тупăшĕ те, бюджета укçа-тенкĕ пухăнасси те ӳсĕ.

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

Ятарлă кăларăм

## Мĕнле пурăнатăн территори пайĕ?

Малашне район хаçатĕнче ятарлă кăларăм-страница хатĕрлес терĕмĕр. Ăна Муркаш муниципалитет округĕн территори пайĕсене халаллатпăр. Асăннă страницăри материалсенче уйрăм территори пайĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарăпăр, юлашки çулсенче территорисене аталантарассипе-хăтлăлатассипе, çулсене йĕркене кĕртессипе, шыв пăрăхĕсене юсассипе, масарсем çинче йĕрке тăвассипе, социаллă учрежденисене юсассипе, ача-пăча площадкисем йĕркелессипе – пĕр сăмахпа вырăнти ыйтусене татса парассипе тĕрлĕрен программăпа проектсене хутшăнса мĕнле ĕçсем туса иртерме май килни пирки каласа парăпăр, малашлăх задачисене уçăмлатăпăр.

Паянхи 1-мĕш кăларăма Уйкас Янасал территори пайне халалларăмăр. Вăл 6-мĕш страницăра пичетленет.

**Райхаçат редакцийĕ.**

# Муркашсем Акатуй уявĕнче савăнчĕç



*Авалхи ырă йăлапа çуркуннехи ака-суха ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн иртерекен Акатуй уявĕ кăçал Лантăш вăрманĕн уçланкинче июнĕн 10-мĕшĕнче кĕрлерĕ. Уявра çурхи ĕçсене пĕтĕмлетрĕç, хастар ĕçпе палăрнисене чысларĕç, конкурссемпе куравсем иртерчĕç, спорт ăмăртăвĕсем йĕркелерĕç, ачасем валли тĕрлĕрен аттракционсемпе вăйă площадкисем ĕçлерĕç. Пултарулăх ушкăнĕсемпе уйрăм ăстасен савăнăçлă юрри-кĕвви вара вăрман тăрăх инçене-инçене саланчĕ.*

*Уяв Муркаш çĕрĕн хастар ĕçченĕсене, яш-кĕрĕме, ача-пăчана – уява килнĕ мĕнпур çынна хавас кăмăл-туйăм, çĕнĕ вăйхал парнелерĕ.*

**Владислав ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Уявра хатĕрленĕ репортажпа хаçатăн 2 – 3-мĕш страницисенче паллашма пултаратăр.**

Уяв

# Республика кунне анлăн паллă тăваççĕ

«Чăваш Енĕн тĕп уявне – Республика кунне – çанă тавăрсах хатĕрленетпĕр. Пур мероприяти те пуян содержаниллĕ. 30 ытла регионтан хăнасем килĕç».

Çапла пĕлтернĕ хăйĕн телеграм-каналĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев.

Республика кунĕнчи тĕп пулăм – Шупашкар экономика форумĕ. Вăл кăçал «Курс на устойчивое развитие» ятпа июнĕн 23 – 24-мĕшĕсенче «Шупашкар-Арена» пăр керменĕнче иртет. Форум программипе 12 ĕçлĕ мероприяти иртерме пăхса хунă. Çав мероприятисене пурĕ 3 пин ытла çын хутшăнасси паллă, вăл шутра – 50 спикер. Вĕсем цифровизаци, импорта ылмаштарасси, стратеги çирĕплĕхĕ пирки калаçĕç.

Форумăн пленарлă ларăвĕ июнĕн 23-мĕшĕнче пулать. Модераторсем – «Россия 24» телеканалăн ертсе пыраканĕсем Александра Суворова тата Юрий Богданов. Форума çак каналпа кăтартса пырĕç. Спикер ролĕнче Промсвязьбанк пĕрлешĕвĕн председателĕ Петр Фрадков, РФ Патшалăх Думин финанс рынок комитечĕн председателĕ Анатолий Аксаков, Стратегиллĕ пуçарусен агентствин генеральнăй директорĕ Светлана Чупшева, Беларусь Республикин Раççей Федерацийĕнчи Чрезвычайлă тата полномочиллĕ послĕ Дмитрий Крутой пулĕç.

Мускавра июнĕн 19 – 21-мĕшĕсенче Чăваш Республикин кунĕсем Федераци Пухăвĕн Федераци канашĕнче иртеççĕ.

Июнĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарта «Диалог культур» ятпа пĕтĕм Раççейри тĕрлĕ наци çамрăкĕсен лагерĕ ĕçлеме пуçлать. Вăл Раççейĕн 21 субъекчĕн çамрăкĕсене пĕрлештерĕ, июнĕн 25-мĕшĕччен ĕçлĕ.

Июнĕн 21-мĕшĕнчех «Строителям безмолвных рубежей» мемориал патĕнче (Куславкка округĕ) «Свеча памяти» акци иртет. Унта пур муниципалитет представителĕ те хутшăнать.

Июнĕн 22 – 24-мĕшĕсенче вара Çĕнĕ Шупашкар хулинче Раççейри професси ăсталăх конкурсĕн «Лучший бульдозерист» номинаци финалĕ тата ЧЕТРА техникин операторĕсен пĕтĕм тĕнчери ăмăртăвĕ иртет. Вĕсем хулан Атăл хĕрринчи лаптăкĕнче пулаççĕ.

Июнĕн 23-мĕшĕнче «Шупашкар-Арена» пăр керменĕнчи «Культура и экономика благотворительности» çавра сĕтел ыр кăмăллăх, экономика тата культура çыннисене пĕрле пухĕ. Калаçăва «Сколково» управлени шкулĕн представителĕ Вероника Мисютина ертсе пырать.

Июнĕн 23 – 24-мĕшĕсенче «Родники России» пĕтĕм Раççейри 31-мĕш фестиваль иртет. Унта кăçал 13 регионти 14 коллектив хутшăнма кăмăл тунă. Фестивале июнĕн 23-мĕшĕнче 19.00 сехетре Шупашкарти Хĕрлĕ площадьре уçаççĕ.

Республика кунĕнче яланхи пекех Акатуй иртет. Вăл чăваш халăхĕпе республика хăнисене Хĕрлĕ площадьре 14.30 сехетре пуçтарать.

Çак кунах 15.00 сехетре филармонире «Я – женщина» конкурса пĕтĕмлетеççĕ.

Хĕрлĕ площадьре касхи концерт программи 17 сехетре «Родники России» фестиваль гала-концерчĕпе пуçланать. Кунтах Çамрăксен кунне халалланă концерт та иртет. Чăваш халăхне Республика Пуçлăхĕ саламлать. 22.30 сехетре «АСАМАТ» фейерверксен фестивалĕ хăйĕн ĕçне пуçлать.

Республика кунĕнче Çĕнĕ Шупашкарта модель библиотекине уçаççĕ. Çак кун хулара интереслĕ мероприяти чылай пулать: кĕрешӳ искусствисен «Чăваш паттăрĕ» фестиваль, фермерсен пасарне уçни, бензопăчкăпа ĕçлекенсен фестивалĕ, этно-фолк-фестиваль, Раççей тата чăваш эстрада юрăçисен концерчĕ тата ытти те.

Çĕнĕ Шупашкарти чи паллă мероприятисенчен пĕри лашасен чупăвĕ пулать. Вăл Чăваш Ен Пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн иртет.

Июлĕн 1-мĕшĕнче вара Мускаври Сокольникире чăваш Акатуйĕ кĕрлет.

Мероприятисене çитсе курма васкăр.

**Наталия НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Акатуй уявĕнчен

# Савăнмашкăн пур сăлтав – ĕçпе юрă юнашар















## Акатуя – Лантăш вăрманĕн уçланкине

Çĕр ĕçĕ – чыслă та хисеплĕ ĕç. Ака-суха туса ирттерекенĕн, тырă-пулă акса-лартса ӳстерекенĕн, çу каçа ăна йĕркеллĕ пăхса ӳстерсе кĕркунне пухса кĕртсе кĕлете хываканăн, çăкăр пĕçерекенĕн, çĕршыва, халăхăмăра тăрантараканăн ылтăн алли мĕн авалтанах хисепре пулнă. Ку халĕ те çаплах.

Тăрăшуллă çĕр ĕçченĕн уявсенче савăнма вăхăчĕ хĕсĕкрех. Тырă-пулă туса илекенĕн кашни кунĕ, кашни сехечĕ шутра. Апла пулин те вăл çурхи ака-суха ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн мĕн авалтан ирттерекен Акатуй уявĕнче тулли кăмăлпа савăнма вăхăт тупатех. Çурхи мĕнпур ĕçе вăхăтра, пахалăхлă туса ирттерсе кĕркунне пысăк тухăç пухса кĕртме çирĕп никĕс хывса хăварнă пулсан вара пĕрле чухне савăнма та кăмăллă.

Йăлана кĕнĕ уява кăçал Муркаш тăрăхĕнче пурăнакансем июнĕн 10-мĕшĕнче пуçтарăнчĕç. Ĕçпе юрă тата спорт уявĕ – Акатуй Лантăш вăрманĕн уçланкинче 68-мĕш хут иртрĕ. Муркашсем уява кăçал Раççейре ирттерекен Педагог тата наставник çулталăкне, Чăваш Республикинче палăртнă Телейлĕ ачалăх çулталăкне тата хамăрăн сумлă ентешĕмĕр Николай Никольский çуралнăранпа 145 çул çитнине халалларĕç.

## Уява уçма вăхăт

Уява салам сăмахĕсем каласа Муркаш муниципалитет округĕн пуçлăхĕ **Алексей Матросов** уçрĕ. Хыççăн вара анлă уçланкăра илемлĕ те илĕртӳллĕ музыкăпа хореографи композицийĕ иртрĕ. Вăл ăрусен çыхăнăвне, ачасен савăнăçлă кун-çулне, тăван халăхăмăр йăли-йĕрки нихăçан та манăçманнине анлăн сăнласа пачĕ. Муркаш тăрăхĕнче чăннипех те пултаруллă та хастар çынсем пурăнаççĕ. Пĕрле ĕçлеççĕ, пĕрле савăнаççĕ, тăван республика тата çĕршыв аталанăвне хăйсен тӳпине хываççĕ.

## Тунă ĕçсем курăмлă

Çурхи уй-хир ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ ятпа саламланă май, Алексей Матросов хăйĕн сăмахĕнче çавна палăртрĕ. Округра пурăнакансем çурхи тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем акмалли плана ăнăçлă тултарнă. Вĕсене пĕтĕмпе 9900 гектар акса хăварнă.

Муркашсем кĕрхи культурăсем акса ӳстерессипе те республикăра малтисенчен пĕрисем. Çĕр улмипе пахча çимĕç те кăçал планпа пăхнă чухлех акса-лартса хăварнă. Вĕсем 300 тата 100 гектар йышăнаççĕ. Вĕсене пысăкрах лаптăксем çинче ӳстерекенсен шутĕнче «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕ, А.А. Толстовăн, А.И. Толстовăн, А.Н. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсем. Выльăх апачĕллĕх кукуруза кăçал 1263 гектар çинче, техника культурисене 748 гектар çинче акса хăварнă. Кĕркунне вĕсенчен пысăк тухăç пухса кĕртесси иккĕлентермест.

Çак ĕçсене туса ирттерекенсем – çĕр ĕçченĕсем, механизаторсем, водительсем, ял хуçалăх специалисчĕсем, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ертӳçисем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисем. Вĕсене пурне те Алексей Матросов тав сăмахĕ каларĕ, малашнехи пĕрлехи ĕçре те ăнăçусем сунчĕ.

Ял хуçалăх производствин ветеранĕсем те уйрăм тав сăмахне тивĕçлĕ. Тĕрлĕ çулсенче вĕсем тăван районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвне хăйсен тӳпине хывнă, паянхи кун та округăн малашлăхĕ вĕсемшĕн ют мар. Вĕсен сĕнĕвĕшухăшĕ яланах пĕлтерĕшлĕ.

## Муркашсене уявпа саламларĕç

«Муркаш округĕнче пурăнакансем ĕçлеме юратаççĕ, вĕсем хăйсен тăван çĕрне юратаççĕ. Тăван ен инфраструктурине ăнăçлă аталантарса пыма пĕрле эсир пĕтĕмпех тума тăрăшатăр. Пирĕн пĕрлехи задачăна пурнăçлама – Чăваш Ене социаллă аталану енĕпе лидерсен шутне кĕртме – сирĕнтен кашниех хăйĕн тӳпине хывать. Пирĕн республикăра ялсене аталантарассипе 78 программăпа проект тата пулăшу мелĕ пурнăça кĕрет. Шанса тăратăп, пĕрле эпир умри пур тĕллеве те пурнăçлама пултаратпăр. Муркаш округне малашне те аталану, унта пурăнакансене вара хăйсен пур шанăçне пурнăçлама сĕнетĕп», – Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Олег Николаевăн ку салам сăмахĕсене Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ **Сергей Павлов** вуласа пачĕ, республика ертӳçи ячĕпе тата хăйĕн ячĕпе кĕтнĕ уявпа саламларĕ, малашлăх плансене пурнăçлама ăнăçу сунчĕ.

Ентешсене Акатуй уявĕпе Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ **Григорий Данилов** та саламларĕ. Вăл муркашсене пĕтĕм Раççей шайĕнчех пĕлнине асăнчĕ. Тĕрлĕ конкурссене хутшăнса вĕсем тăтăшах мала тухаççĕ, призлă вырăнсем йышăнаççĕ. Производство сфери те, культурăпа социаллă сфера та ăнăçлă аталанаççĕ. Ӳсĕмсем пур сферăра та пур.

Муркашсене уявпа саламлакансем татах пулчĕç. Депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн председателĕ, «Единая Россия» партин вырăнти уйрăмĕн секретарĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан **Александр Иванов,** Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ **Павел Вязов,** Росгосстрахăн Чăваш Республикинчи филиалĕн директорĕ **Алексей Пирожков,** Муркаш округĕн Шупашкар хулинчи ентешлĕхĕн ертӳçи, Чăваш Республикин Общество палатин членĕ **Владимир Тяпкин,** АПК ĕçченĕсен профсоюзĕн республика комитечĕн председателĕ **Анатолий Смирнов,** культура ĕçченĕсен профсоюзĕн республика комитечĕн председателĕ **Светлана Демидова,** депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕ **Александр Давыдов** тата ыттисем те ял çыннисене, çĕр ĕçченĕсене çак пысăк уявпа саламларĕç, тав сăмахĕсем каларĕç, ăнăçусем сунчĕç. Муркашсене уявпа Шупашкар муниципалитет округĕн пуçлăхĕ **Николай Хорасев** та саламларĕ.

Акатуй уявĕнчен

# Савăнмашкăн пур сăлтав – ĕçпе юрă юнашар












## Ĕç паттăрĕсене чысларĕç

Пысăк уявра чăн-чăн ĕç паттăрĕсене сцена çине чĕнсе кăларса чысласси-саламласси – ырă йăлара. Ку хутĕнче те çаплах пулчĕ. Уйрăмах йышлă пулчĕç тĕрлĕ хисеплĕ ята, Хисеп грамотисемпе Тав хучĕсене тата ытти наградăна тивĕçекенсем. Сергей Павлов ĕçре палăрнисене «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвĕсене, Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотисене тата Тав çырăвĕсене, Чăваш Республикин Культура министерствин Хисеп грамотипе Тав çырăвĕсене, çавăн пекех чылай çул ĕçлекенсен ушкăнне «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» удостоверенисем парса чысларĕ.

Григорий Данилов вара ĕçре палăрнисене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотисене пачĕ.

Алексей Матросов 2023 çулхи çурхи уй-хир ĕçĕсен пĕтĕмлетĕвĕпе ырă тĕслĕх кăтартнисен пысăк ушкăнне Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн дипломĕсене пачĕ, çавăн пекех Муркаш округ администрацийĕн Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсене тивĕçнисем те сахал мар пулчĕç.

Александр Иванов округăн общественăлла пурнăçĕнче активлăхпа палăрса тăракансене «Единая Россия» партин Чăваш Республикинчи регион уйрăмĕн Тав çырăвĕсене парса чысларĕ.

Павел Вязов пултарулăхпа палăрса тăракансене Чăваш наци конгресĕн Хисеп грамотисене пачĕ.

**(Акатуйра тĕрлĕ шайри наградăна тивĕçнисен тулли списокĕпе район хаçачĕн çитес номерĕнче паллаштаратпăр).**

## Округăн территори пайĕсен «Кил картишĕсенче»

Ĕç паттăрĕсене уяв сцени çинче чысланă чухне «Кил картишĕсен» урамĕнче пурнăç вĕресе кăна тăчĕ. Кашни картишех хăйне евĕр хатĕрленĕ. Кашни картишрех пирĕн историн, аваллăхăн уйрăм тапхăрне сăнланă. Вĕсенче пулса курнă май телейлĕ ачалăх çулĕсене аса илетĕн, авалхи чăвашсен ырă йăли-йĕрки куç умне тухать. Ашшĕ-амăшĕ, хăнасем те ачасемпе пĕрле аваллăх тĕнчине путрĕç. Ахăртнех ачалăх çулĕсене аса илчĕç пулĕ.

Акă Катькас территори пайĕн картишĕ кунта пулса курма тăрăшакансем валли «тăвăртарах» та пулчĕ. Ачасем хăйсен аслашшĕсемпе асламăшĕсен ача чухнехи юррисемпе такмакĕсене шăрантараççĕ кăна, ура хуçса ташша пикенеççĕ. Чăтса тăма та çăмăл мар, вĕсемпе пĕрле ташлас-савăнас килет.

Мăнсĕнтĕрсен картишĕнче çăпатапа авалхи вăйă выляççĕ. Хăнасен те пĕрле выляса пăхма май пулчĕ.

Ильинкăсен картишĕнче пионер пулнă чухнехи вăхăта аса илетĕн.

Юнкăсен картишĕнче спорт туризмĕн çыххисене çыхма вĕрентеççĕ.

Ярапайкассисем патĕнче вара çамрăк химиксем хăйсен сăнавĕсемпе тĕлентермеллипех тĕлĕнтерчĕç.

Çатракассисен картишĕнче хăнасем ачалăх çулĕсене аса илсе ачасемпе пĕрле хут таткинчен хуçлатса туса пĕчĕк самолетсем сывлăша вĕçтерчĕç.

Кашни картишĕн – хăйĕн тĕнчи. Пĕрне теприне хутăштарайман. Апла пулин те вĕсене пурне те чăвашсен аваллăхĕ, историйĕ, йăли-йĕрки пĕрлештерсе-пĕтĕçтерсе тăрать.

«Кил картишĕсен» конкурсĕнче пĕрремĕш вырăн ярапайкассисем çĕнсе илчĕç. Иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсене катькассем тата çатракассисем йышăнчĕç.

## Ал ĕç ăстисен урамĕнче

Ку урамра пулса курнă май, тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕн. Мĕнле кăна ал ĕç ăсти çук пулĕ пирĕн тăрăхра. Çĕлеме-çыхма та, килти хуçалăхра, пӳрт-çуртра усă курма меллĕ тĕрлĕ япала хатĕрлеме те пултараççĕ вырăнти ăстасем. Аслăрахсенчен çак ăсталăха çамрăксем, ачасем те вĕренсе алла илсе пыраççĕ. Çакна Акатуйра та курса ĕненме май пулчĕ. Апла пулсан ăрусен çыхăнăвĕ çирĕп. Апла пулсан пирĕн аваллăх историйĕ, культура еткерлĕхĕ çирĕп алăра.

## Уяв спорт ăмăртăвĕсемсĕр епле-ха?

Акатуйра тĕрлĕ енпе спорт ăмăртăвĕсем чылай иртрĕç. Вĕсене хутшăнакансем те, курма кăмăл тунисем те йышлă пулчĕç. Вăл шутра кире пуканĕ тĕртекенсем те, турник çинче туртăнакансем те, армспорт енĕпе хăйсен ăсталăхне кăтартакансем те, ирĕклĕ майпа кĕрешекенсем те, бокс енĕпе вăй виçекенсем те пулчĕç.

Волейболистсем те хăйсен площадки тавра болельщиксене сахал мар пухрĕç. Хĕрарăмсен тата арçынсен командисем вăй виçрĕç. Вĕсемшĕн вара çав кун чăн-чăн спорт уявĕ пулчĕ темелле.

## Пурте тулли кăмăлпа савăнчĕç

Аслисем валли те, кĕçĕн çулхисем валли та çав кун вăрман уçланкинче савăнăçлă канма пĕтĕмпех пулчĕ. Концерт тата вăйă-конкурс программисем никама та кичем пулма памарĕç. Пĕрлештернĕ хор, культура ĕçченĕсем, тĕрлĕ пултарулăх ушкăнĕсем, ачасемпе çамрăксен коллективĕсем, уйрăм ăстасем уява пухăннисене кунĕпех хавас кăмăл парнелерĕç.

Ачасем хăйсен площадкинче вăхăта хавас ирттерчĕç. Вĕсене савăнма карусель те, батут та пулчĕç, тĕрлĕ аттракцион ĕçлерĕ.

Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен суту-илӳ тата обществăлла апатлану предприятийĕсем, уйрăм предпринимательсем хăйсен продукцине сĕнчĕç. Техĕмлĕ шашлыкĕ те, тутлă шӳрпи те, ытти те пулчĕ.

Муркаш тăрăхĕнче пурăнакансем пысăк йышпа Акатуйра тулли кăмăлпа савăнчĕç, малашне те ӳсĕмлĕ ĕçлеме çĕнĕ вăй-хал пухрĕç.

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»**

# Шкул ĕçне халаллană пурнăç



Ăçта çуралнă – çавăнтах кирлĕ пулнă. Çапла çирĕплетет халăхăмăр ăслăлăхĕ. Çак чăнлăхпа ялта никĕсленнĕ нумай çын пурнăçне хаклама пулать. Çатракасси территори пайĕнчи Çĕньял Очăкассинче хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ, кунтах пурнăç йăви çавăрнă Николай Степанов пирки те **(сăн ӳкерчĕкре)** çаплах калама пулать. Çĕр ĕçлесе пурăннă, килти хушма хуçалăхра выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк ĕрчетнĕ ашшĕ-амăшĕнчен ырă тĕслĕх илсе ӳснĕскер, ял пурнăçĕн тути-масине ачаллах ăша хывнă. «Аппапа иксĕмĕр çĕр ĕçченĕсен çемйинче кун çути курнишĕн эпир нихăçан та хамăра «иккĕмĕш сортлисен» йышне кĕртмен. Пирĕн вăхăтра ялсем улăм витнĕ пӳртсенчен тухса пĕтнĕпе пĕрехчĕ. Ялти яшкĕрĕм вара малашлăха пăхса ятарлă е аслă пĕлӳ илессишĕн тăрăшатчĕ. Пурнăçри ырă улшăнусене алла илекенсене ял халăхĕ те хисеплетчĕ, ашшĕ-амăшне ырăпа палăртатчĕ. Çакна кура хамăр шкулта вĕреннĕ çулсенчех атте-аннен ятне çӳле çĕклесси аппапа иксĕмĕршĕн те тĕп вырăна тухрĕ. Аппа хăйĕн пурнăçне хулапа çыхăнтарчĕ. Эпĕ вара, кил вучахне упраканĕ пулнăран, хамăн кун-çула ял ачисене вĕрентессипе çыхăнтарма шутларăм», – хамăр калаçăва инçетрен пуçларĕ манăн пĕлĕшĕм.

Очăкассинчи 8 çул вĕренмелли шкулта ăс пухнă çулсенче физкультура урокĕсене юратнă арçын ача çуран чупассипе те, йĕлтĕр çине тăрсан та ялан малтисен ретĕнчеччĕ. Çак ăнтăлу унра физкультура вĕрентекенĕ пулас ĕмĕте çуратрĕ. Ăна пурнăçа кĕртес тĕллевпе Николай 8 класс хыççăн Шупашкарти педагогика училищине вĕренме кĕчĕ. Черченипе ĕç уйрăмĕнчи тăватă çул сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Николай Семенович хăйĕн ĕç биографине 1987 çулта Кăпасри 8 çул вĕренмелли шкулта çырма пуçларĕ. Çамрăк вĕрентекене физкультура тата ачасене ӳкерме вĕрентмелли уроксене шанса пачĕç. Яваплăха туйса кӳлĕнчĕ вăл вĕрентекен ĕçне. Кĕçех вăл хатĕрлекен спортсменсем районти ăмăртура ырăпа палăрчĕç. Ку вара çĕнĕ тĕллевсем çуратрĕ. Очăкасси шкулĕнче ĕçлеме пуçласан та ырă тĕллевсем çухалмарĕç.

Малашлăхпа пурăнакан вĕрентекен илнĕ пĕлӳпе çеç çырлахса ларас темерĕ. 2001 çулта вăл Чăваш патшалăх педагогика университечĕн «Юриспруденци» хушма специальноçĕ паракан историпе право факультетне куçăмсăр майпа вĕренме кĕчĕ. Аслă пĕлӳллĕ специалист дипломне алла илсен Николай Семеновича 2009 çулта Очăкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкула ертсе пыма шанаççĕ. Çичĕ çул çак тилхепене тытса пынă хушăра шкул вĕренӳ тата спорт аталанăвĕпе малалла сумлă утăм тăвать. Унăн ӳсĕмĕсем район шайĕнче ырăпа палăрма пуçлаççĕ.

Н. Степановăн пĕр ырă енĕ пур. Вăл мĕн пурнăçланипе лăпланса лармасть. Çапла вара директор тилхепине тытсанах Николай Семенович куçăмсăр майпа Шупашкарти кооператив институтĕнче вĕренӳ управленийĕн менеджменчĕпе пĕлĕве анлăлатма шутлать. Çакă ăна шкул пурнăçĕн уттине çĕнĕлĕхсем кĕртме, ĕç коллективне хавхалантармалли майсем шырама пулăшать. Вĕсем ăна йăлтах 2017 çулта Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкула ертсе пыма шансан кирлĕ пулаççĕ. Николай Семенович учительсен коллективĕнче малтанах ăнланулăх атмосфери туса хурать. Педагогсем пĕр-пĕрне ăнланни-пулăшни, çĕнĕлĕхсене алла илсе тата аталантарса пыни шкулти вĕренӳ процесне çĕнĕ шая çĕклет, пĕрлехи ĕç кăтартăвне лайăхлатать, вĕренекенсен тăрăшулăхне ӳстерет, çĕнĕ шухăшсем çуратать. Шкулта ĕçлекенсемпе вĕренекенсем хушшинче кашнин валлиех паян творчество ӳсĕмĕн картлашки пур.

Шетмĕпуçсем юлашки виçĕ çул хушшинче «Çулталăкри учитель» конкурсра тăтăшах призлă вырăнсене тивĕçни те ертӳçĕ хăй вырăнĕнче пулнине çирĕплетет. Кунсăр пуçне шкул педагогĕсемпе вĕренекенĕсене тăтăшах вĕренекенсен аталанăвĕн нравственноç енĕпе методика идейисен республикăри фестиваль-конкурсĕн çĕнтерӳçисемпе призерĕсен йышĕнче те, республика шайĕнчи «Укçа-тенкĕпе туслă пул» финанс пĕлĕвĕн творчество конкурсĕн çĕнтерӳçисем хушшинче те, республикăри педагогсен урок тулашĕнчи ĕçĕ-хĕлĕн «Çĕнĕ идейисем» конкурсра та, республикăри «Финанс пĕлĕвĕн никĕсĕ» курсăн методикине хатĕрлекенсем хушшинче те, Пĕтĕм Раççейри «Урокăн чи лайăх презентацийĕ» педагогика конкурсĕн çĕнтерӳçинче те, республикăри «Чăваш ачи чăвашах» конкурс призерĕнче те, республикăри «Хальхи шкулти математика тата информатика урокĕсем» 27-мĕш методика фестивалĕн призерĕнче те, республикăри математикăпа информатика вĕрентекенсен методика хатĕрлевĕсен республикăри конкурсĕн призерĕнче те курма пулать.

Асăннă шкулта хушма пĕлӳ парассипе тĕллевлĕ вăй хунине кунти вĕренекенсем тăтăшах республика тата федераци шайĕнчи конкурссемпе фестивальсене ăнăçлă хутшăнни çирĕплетет. Районсем хушшинчи чăваш çи-пуçĕн «Вирьял эрешĕсем» фестиваль-конкурсра, «Раштав çăлтăрĕ» фестивальте, «Чăваш ен халапĕсемпе» «Асамлă тĕрĕ тĕнчи-2018» республика проектĕнче тата «Пĕтĕм чăваш диктантĕнче», республикăри «Чăваш тĕррин ытамĕнче» тĕрĕ конкурсĕнче ырă енчен палăрни те – вĕрентекенсемпе вĕренекенсен пĕрлехи ӳсĕмĕ.

Н. Степанов ертсе пынипе шкул команди регионсем хушшинче шахматла выляссипе ирттернĕ 5-мĕш ăмăртăва хутшăннă, шашкăлла тата шахматла выляссипе районсем хушшинчи конкурсра призлă вырăнсене тивĕçнĕ.

Шкул ĕçне пĕлсе йĕркелесе ертсе пынипе асăннă вĕренӳ учрежденийĕ паян вĕрентӳпе методика, эстетика, производствăпа физкультура центрĕсене пĕр çыхăра тытакан педагогика системи пулса тăрать. Приоритетлă задачăсен йышĕнче – шкулта вĕренекенсене патриот воспитанийĕ парасси. Çак тĕллевпе Пĕтĕм Раççейри «Герой партти» вĕренӳ проекчĕ шайĕнче 2020 çулхи раштавра шкулта Раççей Геройне Евгений Борисова халалласа «Герой партти» уçнине палăртмалла.

Иртнĕ çулсенче шкулти спортзала тĕпрен юсаса хăт кĕртнĕ. Çакă шкулта вĕренекенсене çуран чупассипе тата йĕлтĕрпе ăмăртассипе çĕнĕ ӳсĕмсем тума май панă.

Н. Степанов ертсе пынипе шкул ачисем предмет олимпиадисенче, творчество конкурсĕсенче, спорт ăмăртăвĕсенче çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тăваççĕ. 2018 çулта 8-мĕш класс хĕр ачи Пĕтĕм Раççейри биологи олимпиадин муниципалитет этапĕн призерĕ пулса тăнă. 2019 çулта – 7-мĕш класра вĕренекен хĕр ача. 2018 çулта шкулта вĕренекен хĕр ача çамрăксемпе студентсене тăрăшуллă вĕренӳшĕн паракан стипендие илме тивĕçнĕ. Николай Семенович ертсе пынипе унăн вĕренекенĕсем хушшинче республикăри «Святые воины Руси» конкурсăн çĕнтерӳçи, регионсем хушшинчи «Есенинский диктант» акцин çĕнтерӳçипе призерĕ, çамрăксемпе ачасем хушшинче Пĕтĕм Раççейри «Зимнее чудо» конкурс çĕнтерӳçи, Пĕтĕм Раççейри «Россия – моя Родина» сăвă конкурсĕн призерĕ, республикăри ачасен пултарулăх ĕçĕсен «Дорога к звездам» конкурс призерĕ пур.

Шкул бази çулсерен лайăхланса, пуянланса пырать. Шкулта компьютер класĕ, Интернет пур, классемпе кабинетсенче çĕнĕ сĕтел-пукан, вĕренӳ хатĕрĕ нумай. Çакă ачасем пĕлӳ илессине çӳллĕ шайра сыхласа хăварма пулăшать.

Николай Семенович хăйĕн педагогика ĕçĕнче вĕренекенсене методика пулăшăвĕ парассине, вĕсене тăтăшах шыравра тата опытпа эксперимент ĕçĕ-хĕлĕнче пулма хавхалантарассине тĕп вырăнта тытать. Вăл хăйĕн ĕçне тĕплĕ анализ тунипе, практика кăтартăвĕсене тишкернипе йĕркелесе пырать. Çакă шкула район пурнăçĕпе тан илсе пыма пулăшать.

Пĕрле ĕçлекенсенчен çирĕп ыйтнипе пĕрлех шкул ертӳçи хăйĕн профрессi шайне ӳстерессипе те ĕçлесех пырать. Хăйĕн опытне вăл ĕçтешĕсем хушшинче, семинарсемпе конференцисенче сӳтсе явма тăрăшать.

Ĕçри хастарлăхпа пĕрлех Н. Степанов активлă общественник та. Вăл нумай çул Çатракасси ял тăрăхĕн депутачĕ пулнă. Çакна кура вăл ял çыннисемпе тата шкул ачисен ашшĕ-амăшĕпе, Шетмĕпуç территори пайĕпе яланах активлă çыхăну тытма тăрăшать.

Тăрăшулăхне кура – хисепĕ. Николай Семеновича ĕçри хастарлăха кура пĕрре мар округ администрацийĕн, вĕренӳ пайĕн Хисеп грамотисемпе чысланă. Çавăн пекех вăл Чăваш Республикин Вĕренӳ, çамрăксен политикин министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ.

Ачасене вĕрентес ĕçе чунĕпе парăннă арçын килти хушма хуçалăхра та алă усса лармасть: пахча çимĕç туса илет, сад ĕрчетет, выльăх-чĕрлĕх тытать, чăх-чĕп усрать. Ĕçрен пăрăнмасăр Муркашри вăтам шкулта кĕçĕн классене вĕрентекен мăшăрĕпе Алина Константиновнăпа вĕсем 2 ывăл çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Паян шкултан пушаннă вăхăтра вĕсем килти хушма хуçалăха тулăх тытассипе çанă таварса тăрăшаççĕ. Харпăрлăхра 4 ĕне тытнине кура Степановсем кунта та ял çыннипе пĕр лав çинче пынине, ыттисемшĕн тĕслĕх пулнине палăртмалла. Кăна ырламасăр майĕ çук тесе шутлатăп.

Çĕнелсе пыракан ялсен сăн-сăпатне çителĕклĕ тӳпе хывнă, пурнăçа ял хуçалăхĕнче тата халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕнче пĕр кун юлмасăр ĕçлесе ирттерекенсем Муркаш ен историйĕн уйрăлми пайĕ пулса тăраççĕ. Вĕсен ĕçĕпе иртни манăçмасть, истори малалла çырăнать, округпа республика мал туртăмлă аталанаççĕ.

# Вĕренекенсемшĕн ырă тĕслĕхре

Çулсем иртсен те ăрусен ылмашăвĕнче шкул çав-çавах çамрăк юлать. Ултă çулхисем пĕрремĕш класса пыраççĕ, 17 çулхисем аттестат илсе пурнăç çулĕ çине тухаççĕ. Вĕсене ăна валли тивĕçлĕ воспитанипе тулли пĕлӳ парасси, Тăван çĕршыва юрăхлă çын хатĕрлесси – учителĕн тĕп тĕллевĕ. Эсир паянхи **сăн ӳкерчĕкре** Çатракасси вăтам шкулĕн пуян опытлă вĕрентекенĕсенчен пĕрне куратăр. Вăл – ачасене вĕрентес ĕçре пĕтĕмпе 37 çул вăй хуракан Любовь Никитина.

**Ачалăхри ĕмĕт**

– Эпĕ ача чухнех вĕрентекен ĕçĕ пирки ĕмĕтленме пуçланă. Иртнĕ çулсене тишкеретĕп те хама пуçламăш классенче вулама-çырма вĕрентнĕ тата шутлав виçипе паллаштарнă Татьяна Андреевăна, аслă классенче класс ертӳçи пулнă Лариса Перловăпа Галина Ершовăна, вырăс чĕлхипе литератури вĕрентнĕ Роза Романовăна ман пурнăç çулĕ çине Турри хăй тăратнă тесе шутлатăп паян. Вĕсем ман пурнăçра пулас мар, эпĕ те урăх çулпа каяттăмччĕ пуль. Тен хам малтан ĕмĕтленнĕ пек пуçламăш классен вĕрентекенĕн çулнех суйласа илĕттĕм, – пурнăçра учитель пулас ĕмĕт ачалăхрах тĕп вырăнта пулнине палăртса сăмахларĕ Любовь Валерьевна.

Суйласа илнĕ ĕçĕпе çывăхарах паллашсан паян унăн ĕмĕчĕ туллин пурнăçланни курăнать. Шупашкарти 4-мĕш номерлĕ строительствăпа професси техника училищинче вăтам пĕлӳ аттестачĕ тата ĕç специальноçĕ илсен, Л. Никитина пĕр вăхăт училищĕре производство вĕрентĕвĕн мастерĕ пулса вăй хурать. Çакăн хыççăн малашлăх ĕмĕтлĕ хĕр Чăваш патшалăх университетне историпе филологи факультетне куçăмсăр майпа вĕренме кĕрет. Тăван ялтах тĕпленес ĕмĕтпе киле таврăнсан çамрăк специалиста ял клубне ертсе пыма шанаççĕ. Кунта та пуçарулăх кăтартнă ĕçчене хăй вĕреннĕ Кашмашри 8 класс вĕренмелли шкулти вĕрентекенсем асăрхаççĕ. 1988 çулта вĕсем ăна вырăс чĕлхипе литератури урокĕсене ертсе пыма шанаççĕ.

**Пĕрремĕш урок**

– Пурнăç ĕç çулне хăй уçса панине курса тăрса малтанах пăлхантăм. Анчах хама вĕрентнĕ учительсем мана çак вăхăтра тĕкĕ пачĕç. Вăл вăхăтра шкул директорĕ пулнă Геннадий Конузин мана пĕрремĕш урока 7-мĕш класа илсе кайрĕ. «Хăраса ан тăр, кĕр. Хăвăн ăсна тата вăйна шан, ачасемпе туслаш», – тесе Геннадий Ильич мана алăк уçса класа кĕртсе ячĕ. Паян иртнĕ çулсене тишкеретĕп те унтанпа нимĕн сисĕнмесĕр 35 çул хыçа юлчĕ. Анчах çавăн чухлĕ вăхăт иртнине асăрхаса та юлаймарăм, – терĕ шкул коридорĕпе иртнĕ чух ачасен сывлăха çирĕплетмелли тата кану лагерĕн расписанийĕпе паллаштарнă май педагог тата наставник тилхепине алăра çирĕп тытакан Любовь Валерьевна. Эпир учительсен пӳлĕмне иртнĕ май вăл вĕрентекенсемпе те, шкул ачисемпе те чарăнса тăрса тĕрлĕ ыйтупа епле ĕçлени пирки



кăсăкланчĕ. Ăнлантăм, урăхла майĕ çук.

Вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекен нумай çул ĕнтĕ Çатракассинчи вăтам шкулта тăрăшать. Ĕçре ялан хастар та пултаруллăскер, хăйне шаннă предметсене вĕрентнипе пĕрлех чылай çул ĕнтĕ шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса ĕçлет. «Ачасем итлени, тăрăшса та мал туртăмлă вĕренни ĕçе ăнтарать. Çакăн пек вăхăтра пурнăçăма шкулпа çыхăнтарнишĕн савăнатăп кăна. Ку вара шкул малашлăхĕпе пурăнма хавхалантарать», – терĕ ачасен канăвĕ тĕлĕшпе сĕнӳсем парса черетлĕ тĕл пулăва васкакан вĕрентекен сăн-питрен ăшă йăл-кулă тартмасăр.

**Ӳсĕм никĕсĕ**

Любовь Валерьевна – аслă категориллĕ вĕрентекен. Хăйĕн ĕçне алă тупанĕ çинчи пек курса тăнăран вĕрентекенсемпе вĕренекенсен ыйтăвĕсене те лайăх ăнланать вăл. Çакăнтан пуçланать ĕнтĕ унăн вĕренекенĕсем районти, республикăри, Раççейри фестивальсемпе конкурссенче, олимпиадăсенче ӳсĕм тăвасси. Кунашкал çӳллĕ шая çĕкленнисем вара Л. Никитинан пĕр-икĕ вĕренекен çеç мар.

– Ялти ачасем республика тата Раççей шайĕнче палăрни – ачасен вĕренӳри паттăрлăхĕ. Кашнин çитĕнĕвĕ – çĕнĕлĕх, – хăйĕн вĕренекенĕсен ӳсĕмĕпе савăнса калаçрĕ Çатракассинчи вăтам шкул директорĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен заместителĕ. – Хамăрăн вĕренекенсем вĕрентекен ĕçне суйласа илни, шкула вĕрентӳ практикине килекенсем пирĕн ĕçпе хавхаланни эпир наставник çулĕ çинче ахаль тăманнине те çирĕплетет.

Хастар вĕрентекене 2022 çулта Раççей Федерацийĕн Çутĕç министерствин Хисеп грамотипе наградăланă. Любовь Валерьевна вĕрентнĕ яшсемпе хĕрсем хушшинче педагог çулне суйланисем те пурри вăл ăста наставник пулни пирки калать. Паян вĕсем хăйсем ачасене ăс параççĕ, вĕрентекенĕн паха опычĕпе малалла уса кураççĕ.

«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çӗрӗн мухтавӗ»

# Шкул ӑна туллин пурӑнма пулӑшать



Кашмашра çуралса ӳснӗ, кунтах пурнӑç йӑви çавӑрнӑ, юратнӑ ӗç вырӑнӗ тупнӑ Елена Тихонова вӗрентекенпе **(сӑн ӳкерчӗкре)** иртнӗ кунсенче тӗл пултӑм. Калаçура малтанхи сӑмах хӑй тӗллӗнех ял учителӗ миçемӗш вӗренӳ çулӗ хыçа хӑварни пирки пулчӗ. Кунта Елена Алексеевна шкул ачисем умӗнчи пек мана ӑшӑ кулӑ парнелесе хуравларӗ. «Вӑтанмалли çук, иртнӗ кунсенче 38-мӗш вӗренӳ çулӗ хыçа юлчӗ. 1985 çулта И. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнче пуçламӑш классене вӗрентекенӗн дипломне илнӗ чух ачасене вулама-çырма тата шутлама вӗрентессипе çавӑн чухлӗ ӗçлесси пирки ӗмӗтленмен те. Анчах куç хӑрать те алӑ тӑвать. Паян иртнине çаврӑнса пӑхатӑп та хам суйласа илнӗ çулшӑн пӗртте кулянмастӑп. Ачасене пурнӑç çулӗ çине тухма хатӗрлесси вӑл – пысӑк телей. Ӑна ачасене хытӑ юратсан çеç туллин пурнӑçлама пулать», – ӑнлантарчӗ сӑмах патне кӳрше кайман вӗрентекен.

Инçетри ачалӑхра учителле выляма юратнӑ хӗр пӗрчи ӳсерехпе çак вылява профессие куçарнӑ. Ума ырӑ тӗллев лартнӑ хӗрӗн çулӗ те уçӑлса пынӑ. Институт пӗтернӗ çулах çамрӑк педагога хӑй вӗреннӗ Кашмаш шкулне чӗнеççӗ. Пысӑк опытлӑ Т. Андреева вӗрентекен тивӗçлӗ канӑва кайнӑ пирки ӑна вӑл ертсе пынӑ иккӗмӗш класа шанса параççӗ. Елена Алексеевна пӗрремӗш уроках ачасене юратса кӗнине паян та асрах тытать.

– Урӑхла юрамасть. Хамӑра вӗрентнӗ учительсем те ялан пире хисеплетчӗç, юрататчӗç, çирӗп пӗлӳ парассишӗн тӑрӑшатчӗç. Çак ырӑ йӑлана малалла тӑсасси манӑн тӗллев пулчӗ. Хам вӗрентнӗ ачасемпе вӗсен ашшӗ-амӑшӗсем паян иртнӗ вӗренӳ çулӗсене ырӑпа аса илнӗрен тӗллев пурнӑçланчӗ тесе шутлатӑп, – кӑмӑллӑ туйӑмпа калаçать кӑçал кукамай пулса тӑнӑ вӗрентекен.

Паян тӑрӑшуллӑ вӗрентекен класӗнче 17 ача ӑс пухать. Елена Алексеевна каланӑ тӑрӑх, пурте вӗсем активлӑ: вӗренӳре те, сцена çинче те, спортра та.

Ку тӗлте пирӗн калаçу хӑй еккипе пырса Е. Тихоновӑн хӗрӗ Виктория çине кӗрсе кайрӗ. Çӗнтерӳ кунӗнче çуралнӑран ӑна Вика ят панине те пӗлтӗм. Пултаруллӑ амӑшне хывнӑ хӗр 2015 çулта «Чӑваш пики» конкурсра çӗнтерсе Крыма канма кайма путевка çӗнсе илни те, вӑтам шкула ылтӑн медальпе вӗçлени те паллӑ пулчӗ. Хӗрӗ амӑшне хывнӑ тенӗрен тата паянхи калаçу Елена Алексеевна пирки пулнӑран, вӑл пур çӗре те епле ӗлкӗрни пирки туллин каласа хӑварас килет. Мӗн пӗчӗкрен сценӑпа туслашнӑскер çак юратӑва та анлӑлатса пынӑ. Кашмашри халӑх театрне нумай çул çӳренӗ, паян – кунти Культура çурчӗ çумӗнчи «Ӑраскал» ансамбль солистки.

– Пурнӑç вӑл – театр. Çавӑнпа кашнин артист пулма тӑрӑшмалла, çынна хисеплемелле, вӑл хӑйне юратнине кашни кун туйса тӑтӑр. Çавӑн чухне çеç пирӗн обществӑра килӗшӳ хуçаланӗ, лӑпкӑ пурнӑç пулӗ, – сӑпайлӑн калаçать Елена Алексеевна хӑйӗн вӗрентекенӗсем те сценӑпа туслӑ пулнине палӑртса.

Кашмаш шкулӗнче пуçламӑш классене вӗрентекенӗн тепӗр ырӑ енӗ – ӗмӗрӗпех спортпа туслӑ пулни. 2019 çулта вӑл хӑйӗн ӳсӗмӗпе ГТОн ылтӑн паллине тивӗçнӗ. Ялан активлӑ учительницӑна ытларах сӗтел çи теннисла вылянӑ çӗрте тӗл пулма пулать. Кунта вӑл час-часах хӑйӗн ӗнерхи вӗренекенӗсемпе ӑмӑртать. Çавӑн пекех хӗлле – йӗлтӗрпе, çулла çуран чупассипе ял çыннисемшӗн те, хӑйӗн вӗренекенӗсемшӗн те вӑл ырӑ тӗслӗх пулса тӑрать.

Кунта вӗрентекенӗн ӳсӗмӗсене палӑртса хӑварни те ытлашши пулас çук. «Самый класный классный» конкурссенче 2009 тата 2012 çулсенче палӑрнӑскер, районти пуçламӑш классене вӗрентекенсен «Уçӑ урок» фестивальне хутшӑнса юлашки çулсенче пӗрре мар округ администрацийӗн вӗренӳ, çамрӑксен политикин, физкультурӑпа спорт пайӗн дипломӗсене çӗнсе илнӗ. Унӑн сӗтелӗ çинче паян округ администрацийӗн культура тата архив ӗçӗсен пайӗн, Çатракасси территори пайӗн, ял библиотекин, округ администрацийӗн Тав çырӑвӗсемпе Хисеп грамотисем, Чӑваш Республикин Вӗренӳ министерствин Хисеп грамоти пур.

Чыславсем кашниех педагогӑн тата наставникӑн ӗçне туллин уçса параççӗ тесе вӗçлетӗп хамӑн калаçӑва. «Ачасем манӑн пурнӑç тӗшши тата унӑн тулли илемӗ пулса тӑчӗç. Çакӑншӑн эпӗ савӑнатӑп», – терӗ Елена Алексеевна сӑн ӳкерчӗкри хӑй вӗрентекен ачасем çине ӑшӑ кӑмӑлпа пӑхса. Вӗсен кашнин пурнӑçри ӳсӗмӗ – вӗрентекенӗн телейӗ. Çапла йышӑнать хӑй вӗреннӗ ачасен ӑнӑçӗвне мал туртӑмлӑ вӗрентекен тата ӑнӑçлӑ наставник.

**Кӑларӑма Анатолий БЕЛОВ хатӗрленӗ.**

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çӗрӗн мухтавӗ» проект Чӑваш Республикин Цифра аталанӑвӗн, информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви пулӑшнипе пурнӑçланать.**

Июнӗн 18-мӗшӗ – Медицина ӗçченӗн кунӗ

# Туслӑ та ӑста коллектив яланах пулӑшма хатӗр




Муркаш район тӗп больницинче хирурги уйрӑмӗ 1982 çулта уçӑлнӑ. Унтанпа хӗрӗх çул хыçа юлнӑ ӗнтӗ, чылай улшӑну пулса иртнӗ, хирурги уйрӑмӗн ӗçне нумай çӗнӗлӗх кӗрсе пынӑ. Çапах та çак уйрӑмри коллективӑн тӗп задачи улшӑнмасть – хальхи вӑхӑтри технологисене ӗçе кӗртсе пырса васкавлӑ тата плановӑ операцисене ӑста туса çынсене пулӑшасси.

Стационар корпусӑн виççӗмӗш хутӗнче вырнаçнӑ хирурги уйрӑмӗнче хальхи вӑхӑтра сипленекенсем валли 50 койка уйӑрнӑ, вӗсенчен 11-шӗ – кӑнтӑрлахи сиплеве çӳрекенсем валли. Уйрӑмра медицина пулӑшӑвӗ пама кирлӗ оборудованипе тивӗçтернӗ, çӗннисене те май килнипе туянса пыраççӗ.

Хирург пулӑшӑвӗ çынна кирек хӑш вӑхӑтра та кирлӗ пулма пултарать. Çавӑнпа кунта талӑксерен дежурство йӗркеленӗ – хирург, анестезиолог, операци медицина сестри талӑкӑн хуть те хӑш вӑхӑтӗнче пулӑшма хатӗр. Паллах, кирлӗ чухне ытти профиль специалисчӗсене те явӑçтараççӗ. Хирурги уйрӑмӗнче çынсене хальхи вӑхӑтра хирурги, урологи, травматологи тата гинекологи енӗпе пулӑшу параççӗ.

Хирурги уйрӑмне аслӑ категори врачӗ Николай Григорьев хирург ертсе пырать. Унпа пӗрле ӗçлекен хирургсен коллективӗ те ӑста специалистсенчен тӑрать: Чӑваш Республикин тава тивӗçлӗ врачӗ, РФ сывлӑх сыхлавӗн отличникӗ, аслӑ категори врачӗ – Леонид Андреев, 1 категори врачӗ – Леонид Сильвестров хирург, аслӑ категори врачӗ – Юрий Кузнецов хирург, аслӑ категори врачӗ – Владислав Данилов хирург, Николай Карпов хирург врач.

Хирурги уйрӑмӗнче 18 медсестра вӑй хурать: 11-шӗ постра тимлеççӗ (икӗ пост), процедурӑсем тӑвакан медсестра 2, операци медицина сестрисем – 4. Çак ушкӑна аслӑ медицина сестри Ольга Захарова ертсе пырать.

Вӑтам медицина персоналӗ те ӑста специалистсенчен тӑрать. Çакна 12 медсестра аслӑ категори медсестрисем, 3 – пӗрремӗш категорипе пулни çирӗплетет.

Палӑртмасӑр иртме çук, çак туслӑ та хӑйӗн ӗçне ӑста пурнӑçласа пыракан коллектив муркашсене кӑна мар, кӳршӗри элӗксене, етӗрнесене тата Козьмодемьянск тӑрӑхӗнчи çынсене те хирурги пулӑшӑвӗпе тивӗçтерет.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Пӗрлехи информаци кунӗнчен

# ФАП-ра аптека уçма май пур-ши?

Майӑн 17-мӗшӗнчи пӗрлехи информаци кунӗнче Муркаш муниципалитет округне килсе çитнӗ ӗç ушкӑнӗ округ пуçлӑхӗпе Алексей Матросовпа пӗрле Катькас ял тӑрӑхӗнче пулнӑччӗ.

Информаци кунӗнче ял çыннине пӑшӑрхантаракан ыйту нумай пулчӗ. Пӗрине, республика шайӗнче тишкермеллине, ун чухне каярах хурав пама шантарнӑччӗ.

Шомикри тӗл пулура панӑ ыйту çакӑн пек: Муркаш тӗп больницин тытӑмӗнчи Шомик ФАП-ӗнче аптека уçма май пур-ши?

Ыйтӑва Чӑваш Республикин Сывлӑх сыхлав министерствинчен çакӑн пек хурав панӑ:

«Об обращении лекарственных средств» Федераци саккунне 2010 çулхи апрелӗн 12-мӗшӗнче кӗртнӗ улшӑнусем фармацевтика ӗçне пурнӑçласа пыма лицензи пур медицина организацийӗсене, ялсенче тата çитме йывӑр вырӑнсенче вырнаçнӑ вӗсен подразделенийӗсене эмел препарачӗсене дистанци мелӗпе сутма май панӑ, эмел енчен пулӑшу парассине ял çыннишӗн мелӗрех тунӑ.

Анчах та эмелпе тивӗçтерессине çӗнӗ майпа йӗркелеме май туса панӑ пулин те, инçерех вырнаçнӑ ялсенче пурӑнакансене эмел препарачӗсемпе тивӗçтерессине меллӗ туса парас ыйту çивӗч тӑрать. Çакӑ медицина организацийӗсен тата вӗсен структура подразделенийӗсен эмел препарачӗсене ваккӑн сутма лицензи çуккипе, эмел препарачӗсене туянма укçа-тенкӗ çаврӑнӑшӗ çуккипе, Интернет çуккипе е вӑл пӑтӑрмахлӑ ӗçленипе, фармацевт вӑтам тата аслӑ пӗлӗвӗ илнӗ кадрсем çитменнипе çыхӑннӑ.

Хушса çакна калатпӑр: 2020 çулхи мартӑн 2-мӗшӗнче Раççей Федерацийӗн Патшалӑх Думине «О внесении изменений в Федеральный закон «Об обращении лекарственных средств» тата «Об основах охраны здоровья граждан в Российской Федерации» Федераци саккунӗн проектне сӗннӗ. Вӗсене шӑпах Раççей Федерацийӗнчи граждансене, вӑл шутра ялта пурӑнакансене тата çитме йывӑр вырӑнсенче пурӑнакансене те, эмел препарачӗсемпе пӗр тикӗс тата комплекслӑ майпа тивӗçтерес тӗллевпе çырса хатӗрленӗ. Саккун проектӗнче «куçса çӳрекен аптека пункчӗ» ӑнлав пур тата унӑн ӗç енӗсене палӑртнӑ.

Çак саккун проектне йышӑнни эмел препарачӗсене ваккӑн сутассине саккунлӑ майпа туса пыма май памалла. Ку ӗçе куçса çӳрекен аптека вырӑнсене тухса çӳренипе те йӗркелеме май пулмалла. Çакӑ ялта пурӑнакансене, вӑл шутра инçе тата çитме йывӑр вырӑнсенче пурӑнакансене те, эмел препарачӗсемпе тивӗçтерес ыйтӑва татса пама пулӑшӗ».

**Наталия НИКОЛАЕВА хатӗрленӗ.**

Муркаш округĕн территори пайĕсен ĕçĕ-хĕлĕ

# Уйкас Янасал территори пайĕ

## *Уйкас Янасал, Васкасси, Юрпаш, Уйкас Апаш, Кĕртекасси, Купăрля, Сосновка ялĕсем*

# Ыйтусене пĕрле татса пама тăрăшатпăр

Территори пайĕн тĕп задачи – çынсене пурăнма, ĕçлеме тата канма, хăйсен вăхăтне усăллă ирттерме лайăхрах майсем туса парасси, общеcтвăлла йĕркелĕхе тата пурнăç хăрушсăрлăхне тивĕçтересси. Хăйсен тĕп ĕçĕсене йĕркелесе туса пынă чухне шăпах ĕнтĕ çак задачăсене тĕпе хума тăрăшаççĕ те.

Республика шайĕнче те, Муркаш округĕнчи ытти территори пайĕсенче те хальхи вăхăтра усă курмасăр пушă выртакан, хуçасăр çĕр участокĕсене пусă çаврăнăшне кĕртесси пĕлтерĕшлĕ ыйтусен шутĕнче пулсан, пирĕн патра ку ыйтăва темиçе çул каяллах татса панă ĕнтĕ. Пирĕн тăрăхра кун пек çĕр участокĕсем пачах çук.

Çакăнта пĕлтерĕшлĕ вырăн – вырăнти пĕрлешÿллĕ хуçалăх – Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ ÿсĕмлĕ ĕçлесе пынинче. Çирĕп ертÿçĕ алликче пулнипе вăл ытти хăш-пĕр çĕрти пек саланса каймарĕ, совет саманинчен тытăнсах ăнăçлă ĕçлесе пычĕ. Ял çыннисен усă курман пай çĕрĕсене те вырăнти пĕрлешÿллĕ хуçалăх арендăна илсе тухăçлă усă курать. Çавăнпа та пирĕн тăрăхра хресчен (фермер) хуçалăхĕсем пачах пулманнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар пулĕ тетĕп.

Çĕршыв шайĕнче те, республика шайĕнче те хальхи вăхăтра ял çине тимлĕх ытларах уйăрма тытăннипе пурте курса тăратпăр. Ялта пурăнакана пулăшма тĕрлĕ программа, тĕрлĕ пулăшу мелĕ пăхса хунă. Пирĕн ялсенче пурăнакансем те вĕсемпе туллин усă курма тăрăшаççĕ.

Çамрăк çемьесем хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма патшалăх пулăшăвне тивĕçеççĕ. Пĕлтĕр кун пек çемьесем 2 пулчĕç. Кусем вĕсем Инессăпа Анатолий Петровсен тата Валентинăпа Армен Аветянсен çемйисем. Кăçал та субсидие тивĕçме тепĕр çемьене черете тăратрăмăр. 2012 çултан тытăнса 2020 çулччен вара пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма 20 çемьене субсидипе тивĕçтернĕ.





Юлашки çулсенче пирĕн тăрăхра вырăнти инфраструктурăна аталантарассипе пуçарулăх бюджечĕн программи анлă çул тупрĕ. Çынсем хăйсем те хутшăннипе вырăнти çулсене йĕркене кĕртетпĕр, ялсене ĕçмелли шыв ыйтăвне татса пама май килет тата ытти хăтлăх ĕçĕсем туса ирттеретпĕр. Çапла майпа пĕлтĕр шывпа тивĕçтермелли системăсене Купăрляра тата Сосновкăра юсаса çĕнетме пултартăмăр. Юсав ĕçĕсем валли уйăрнă сумма 3,78 млн тенкĕпе танлашрĕ. Кăçал вара Кĕртекассинче пĕвесене тасатса территорие йĕркене кĕртме 916 пин тенкĕ тата Васкассинче шыв скважини алтма, çĕнĕ башня тума тата шыв пăрăхĕсем хурса хăварма 7,2 млн тенкĕ уйăрнă. Тĕрĕссипе Васкассинче çак кунсенче подряд организацийĕ ĕçлеме тытăнчĕ ĕнтĕ **(сăн ÿкерчĕкре).** Малашне кун пек ĕçсене Кĕртекасси тата Уйкас Апаш ялĕсенче те туса ирттерес шухăшлă. Маларахри çулсенче вара пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнса Васкассинче, Купăрляра вак чул сарнă çулсем тунă.

Тасалăх, тирпейлĕх ĕçĕсене манăçа кăлармастпăр. Территорире икĕ масар – Уйкас Янасалта тата Уйкас Апашра. Вĕсене тирпейлĕ тытса тăма тăрăшатпăр. Çуллен çуркунне юр кайса пĕтсен масарсем çинче субботниксем ирттерессИ йăлана кĕнĕ. Кăçал та кун пек субботниксем апрельте ирттертĕмĕр. Ялсенче те тасалăхпа тирпейлĕх ĕçĕсене йĕркелеме тăрăшатпăр.

Пĕрлехи кулленхи ĕçсене туса ирттерме пур чухне укçа-тенкĕ çитсе пымасть. Çавăнпа та ырă чунлă ял çыннисене, хамăр спонсорсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр пулăттăм. Кун пеккисенчен пĕри – Олег Николаев предприниматель. Пулăшусăр нахăçан та хăвармасть. Кăçал та вырăнта Акатуй ирттерме пулăшма май тупрĕ. Çавăн пекех хăйсен магазинĕсене тытакансем Алина Николаева тата Анатолий Егоров та айккинче юлма шутламаççĕ. Вырăнти Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн пулăшăвĕ те яланах вырăнлă.

Хамăр патра çынсен пурнăç условийĕсем мĕнле пуласси ытларах хамăртанах, хамăр пуçарулăх пулнинчен килет. Çакна ял çынисенчен ытларахăшĕ тĕрĕс ăнланать.

**Людмила МИХАЙЛОВА,**
**Уйкас Янасал территори пайĕн пуçлăхĕ.**

# Тĕп вырăнта – хăтлăх

Муркаш район тĕп больницинче медицина сестринче ĕçлетĕп, кăçалчен ял çыннисем шаннипе 10 çул хушши депутатсен Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕн тивĕçĕсене те пурнăçланăччĕ. Çавăнпа та ял çыннисемпе ĕçлесси, вĕсен ыйтăвĕсене пĕрле епле татса парасси маншăн çĕнĕлĕх мар.

Хамăрăн пĕрлехи вăйпах маларахри çулсенче те, халĕ те сахал мар ĕç туса ирттерме пултартăмăр. Республикăра пуçарулăх бюджечĕн программи ĕçлеме тытăнсанах пирĕн ялта пурăнакансем унта хутшăнма кăмăл тунăччĕ. Çапла вара эпир ун чухне Мир урамĕнче вак чул сарнă çул тума май çитертĕмĕр. Унчченйĕпе-сапара, уйрăмах çуркуннепе кĕркунне урамра йĕркеллĕ çул пулманнипе сахал мар тертленме тивнĕ.

Юлашки çулсенче пуçарулăх бюджечĕн программи пирĕн тăрăхра анлă çул тупрĕ. Çапла майпа çынсем хăйсен пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕсене татса параççĕ. Пирĕн территори пайĕнчи ялсенче вара ĕçмелли шыв ыйтăвне татса парассипе ытларах ĕçлеме тытăнчĕç. Ку енĕпе шăпах ĕнтĕ пуçарулăх бюджечĕ мелĕпе усă курма лайăхрах. Çапла майпа пĕлтĕр икĕ ялта шыв пăрăхĕсене улăштарса çĕнетнĕччĕ. Кăçал та ку ĕçсем малалла тăсăлаççĕ.

Пирĕн ялта та шыв ыйтăвĕн çивĕчлĕхĕ çук мар. Çуллахи шăрăх кунсенче шывсăр тертленнĕ самантсем сахал мар пулаççĕ. Çавăнпа та çитес çулсенче хамăр ялта та çапла майпа шыв пăрăхĕсене çĕнетес шухăшлă. Пурте пĕрле ĕçе кÿлĕнсен пирĕн ялта пурăнакансем ĕçмелли шыв ыйтăвне те татса пама пултараççех тесе шутлатăп.



Хăтлăх ĕçĕсене ял çыннисемпе пĕрле вĕçĕмех туса пыма тăрăшатпăр. Субботниксем ирттермесĕр ниепле те май çук. Акă ял плотининех илер. Ку вăл – пулăçсен юратнă вырăнĕ. Пулă тытма кунта килсе çÿрекенсем сахал мар. Анчах та ялан тенĕ пекех вĕсем хыççăн тасамарлăх юлать. Тирпей-илем ĕçĕсене хамăр вăйпах туса ирттерме тăрăшатпăр. Урам хушшисене таса тытас, пиçен-курăк тавраш çулса пухса тирпейлес енĕпе те çу каçа тимлемелли сахал мар. Ытларахăшĕ пĕрлехи мероприятисене активлă хутшăнать.

Ялта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисене асăнса лартнă палăк пур. Ун таврашĕнчи территорие яланах тирпейлесе тăма тăрăшатпăр. Çавăн пекех масар территорине тасатса тăрассипе те ял çыннисемех тимлеççĕ. Территорисене тасатса тирпейлеме йĕркелекен субботниксене ытларахăшĕ активлă хутшăнать.

Пирĕн ял старости Алексей Аврамов та хастар çын. Хăйĕн тракторĕпе тĕрлĕ ĕç пурнăçласа парать, нихăçан та ÿркенсе тăмасть. Ял çыннисен выльăхĕсене кĕтсе çÿремелли улăха та вăл тимленипех тасатса тирпейлерĕмĕр.

Активлисемпе пуçаруллисем татах пур. Акă Виталий Петров, Николай Булавкин, Апполинария Булавкина, Людмила Николаева, Рената Терентьева тата ыттисем – пĕрлехи ĕçшĕн чунпа çунса тăракансем. Шăпах çакăн пеккисенчен килет те ĕнтĕ пĕрлехи ăнăçу.

Ĕçлеме те, канма та пĕлеççĕ пирĕн ялта пурăнакансем. Пушă вăхăта усăллă ирттерессипе те пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Ял кунĕн уявĕсене çуллĕ шайра ирттеретпĕр. Спорт мероприятийĕсенче те хастар. Акă Николай Никольский юбилейĕ ячĕпе ирттернĕ волейбол ăмăртăвне те пирĕн ял команди активлă хутшăнчĕ. Пĕрле чухне вара ял-йышпа ĕçлеме те, савăнăçлă канма та аван.

**Римма КИРИЛЛОВА,**
**Уйкас Янасал ялĕн активистки.**

# Ял çыннисем пуçаруллă

Купăрля ялĕ пирки калас пулсан, чи малтанах чăвашсен пĕрремĕш профессорне, чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕн – «Хыпарăн» никĕслевçине Николай Никольские аса илме тивет. Шăпах ĕнтĕ пирĕн тăрăхра çуралса ÿснĕ вăл. Паллă ентешĕмĕр çуралнăранпа 145 çул çитнине кăçал чаплăн уявларăмăр.

Уяв уявпа та, анчах та вăл хатĕрленмесĕр, тăрăшмасăр пулмасть. Çак куна хатĕрленсе Николай Никольский паркĕнче, кунти илемлĕ пĕве тавралла ял çыннисемпе пĕрле хăтлăх ĕçĕ сахал мар туса ирттертĕмĕр. Паркри сценăна та пĕтĕмпех сăрласа-илемлетсе çĕнетрĕмĕр.

Ку вăл – пĕр тĕслĕх кăна. Ялта вара пĕрлехи вăйпа туса ирттермелли кун пек ĕçсем куллен тенĕ пекех тупăнса тăраççĕ. Çурхи кунсем çитсен юр айĕнчен тухакан тасамарлăха пухса тирпейлесси, тавралăха хăт кĕртесси пирки тимлеме тивет. Кайрантарах вара урамсенчи курăка çулса тирпейлесси çинчен шухăшлама вăхăт.



40 çул хамăр патри шкулта ачасене вĕрентрĕм. Халĕ пенсире ĕнтĕ. Общеcтвăлла ĕç маншăн нихăçан та ют пулман. Лайăх пĕлетĕп, хамăр пурăнакан вырăнти хăтлăха хамăрăнах, ял çыннисенех тытса тăмалла. Пĕччен-иккĕн тăрăшнипе нимĕн те пулмасть. Тав Турра, çак чăнлăха ăнланакан тăрăшуллă çынсем пирĕн ялта сахал мар.

Акă Николай Алексеевах илер. Нихăçан та кутăнлашса тăмасть. Яланах пулăшать. Кăçал та, килĕнче строительство ĕçсем пыратчĕç пулин те, вăхăт тупса хăйĕн инструменчĕсемпех хăмасем çурса майласа парса хăварчĕ. Пиччĕшĕн ачи Александр Алексеев та пĕрлехи ĕçсенче яланах малтисен ретĕнче. Евгений Васильев, Николай Никитин, Петр Степанов, Николай Степанов, Димитрий Яковлев, Евгений Андриянов – пурте маттур.

Владимир Михайлов вара хĕл кунĕсенче хăйĕн ирĕклĕх хулара ĕçлесе пурăнакан хамăр тăрăхри ял çамрăкĕсене чĕнсе пухрĕ те пĕве хĕрринчи хăрăк йывăçсене пĕтĕмпех касса тирпейлерĕç. Мĕншĕн тесен çу кунĕсенче ку ĕçсене туса ирттерме меллех мар.

Пирĕн ялта пенсионерсем те хастар. Тивĕçлĕ кану çулĕсене пăхмасăрах, пĕрлехи ĕçсене активлă хутшăнаççĕ. Уйрăммăн вара Зинаида Степановăна, Нина Алмазовăна, Эльвира Васильевăна, Эльвира Ивановăна, Ульяна Семеновăна, Ирина Алексеевăна, Григорий Степанова, Валентина Федотовăна палăртса хăварнă пулăттăм.

Территори пайĕ йĕркеленипе тĕрлĕрен мероприяти пирĕн патра тăтăшах иртет. Кун пек мероприятисенче йĕркелекен куравсенче вара хамăр ялти ал ĕç ăстисен Елена Петрован, Людмила Михайлован, Луиза Степанован, Алина Степанован, Альбина Петрован илемлĕ ĕçĕсене курма яланах хавас.

Пирĕн патра «Тăван ен сăл кусĕсем» художество пултарулăх коллективĕ йĕркеленĕ. Ăна Светлана Максимова учитель ертсе пырать. Тĕрлĕ уявра унта çÿрекен Римма Кириллова, Августина Степанова, Валерий Степанов, Галина Никонорова хăйсен илемлĕ сассисемпе тыткăнлаççĕ.

Пĕр сăмахпа, тулли пурнăçпа пурăнатпăр. Ĕçлес, савăнас килет. Ватăлма вăхăт та çук.

**Валентина ИПАТЬЕВА,**
**РФ пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ, Купăрля ялĕн старости.**

**Кăларăма Владислав ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Вăрçă ачисем

# Пăрусене правленире хĕл каçарнă

Муркаш округĕн Хисеплĕ гражданинĕ Алексей Петров 1928 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнче Шетмĕпуç территори пайĕнчи Катăкуйĕнче 8 ачаллă хресчен çемйинче çуралнă. Мĕн пĕчĕкрен çĕр ĕçĕпе, выльăх-чĕрлĕх пăхассипе çывăх тăнă. Çынпа çын пек пулма тăрăшнăран ĕç юратăвĕ, ĕçлекен çынна хисеплесси, панă сăмаха тытасси – унăн тĕп пахалăхĕсем. Çавăнпах пулĕ Алексей Петрович кирек кампа калаçнă чух та хăйне тивĕçлĕ шайра тытать.



Алексей Петровичăн ячĕсумĕ йăлтах халăх шаннă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланипе çыхăннă. Хăйне ырă енчен кăтартнă арçынна 1957 çулхи çĕртме уйăхĕнче Шетмĕпуç, Катăкуй, Карманкасси ялĕсене пĕрлештернĕ Калинин ячĕллĕ (каярах Мичурин яч. хис.) колхоза ертсе пыма суйлаççĕ. «Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн ял хуçалăхне ура çине тăратма йывăрччĕ. Малашлăхпа ĕçлес тесен алă усмалла мар. Выльăхсем йышлă, анчах апачĕ кĕртăнкă пулни тăтăш шыравра пулма хистетчĕ», – терĕ ĕç ветеранĕ. Кунта пĕрремĕш хĕлле колхоз пăрăвĕсен 20 пуçне хуçалăх кантурĕнче хĕл каçарни те аса килчĕ. Правление вара уйрăм çын килне куçарма тивнĕ.

А. Петров хуçалăх тилхепине 22 çул çурă тытса пынă вăхăтра тырă-пулă тухăçĕ гектар пуçне 5,5 центнертан 28 центнера, сăвăм 600 килограмран 4,5 пин килограма, сыснасен талăкри ватăм ӳт хушаслăхĕ 700 грама çитнĕ. Çак тапхăртах автоçулсем, ялсенче шыв плотинисем, фермăсем, тырă склачĕсем, çĕр улми хранилищисем, хушма производство объекчĕсем, гараж, юсав мастерскойĕпе тимĕрçĕ лаççи тăвассипе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Çав çулсенчех хуçалăха техника та йышлă килме пуçланă, ялсене электричество çути, радио çитнĕ. Колхоз пулăшнипе ялсенче клубсем, Шетмĕпуçĕнчи Культура çурчĕ, ытти социаллă объект çĕкленнĕ, ĕçмелли шыв пăрăхпа çитнĕ, ялсене шыв усракан башньăсем 10 лартнă, 8 кĕпер тунă, Шетмĕпуçĕнче шкул никĕсне янă.

Çак вăхăтра пурлăхпа техника базин те пуянланнă. Машинăпа трактор паркĕнче 40 автомашина, 30 трактор, тырă вырмалли 15 комбайн пулнă. Выльăх-чĕрлĕх тĕлĕшĕнчен илсен фермăсенче 3 пин пуç сысна, 700 пуç сурăх, 35 лаша, 1600 пуç мăйракаллă шултра выльăх, çав шутран 200 пуç сумалли ĕне тăнă.

Шаннă ĕçре ответлăха туйса вăй хунăшăн, ял хуçалăхĕнче çĕнĕлĕхсене çул панăшăн Алексей Петрович тĕрлĕ çулсенче «Хисеп Палли», Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, Октябрь революцийĕ, Халăхсен туслăхĕ орденсен, «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медаль кавалерĕ пулса тăнă. Вăхăтра ăна Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Кунсăр пуçне вăл 1975 çулта Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ята тивĕçнĕ.

Пултаруллă председателе 1979 çулта Муркаш райпоне ертсе пыма шанаççĕ. Йывăрлăхсене пăхмасăр райпона 11 çул ертсе пынă вăхăтра ертӳçĕ тăрăшнипе райпо тытăмĕнче 25 магазин тунă. Муркашра суту-илӳ çурчĕпе «Сказка» кафе ĕçлеме пуçланă. Суту-илĕве ăнăçлă ертсе пынăскере 1988 çулта «СССР потребкооперацийĕн отличникĕ» ят панă.

А. Петровăн мăшăрĕ Римма Михайловна та хăйĕн ĕç ĕмĕрне ялпах çыхăнтарнă. 1948 çулта Вăрнарти зооветеринари техникумĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухсан Красноармейски район хĕрне Шетмĕпуçĕнчи ветеринари участокне ертсе пыма шанаççĕ. Хăй суйласа илнĕ ĕçе вăл çанă тавăрса кӳлĕнет. Ялта пурăнакансен, пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн выльăх-чĕрлĕхне таса-сывă тытассине пĕрремĕш кунранах çирĕп алла илет. Хăйĕнчен те, çынсенчен те çирĕп ыйтакан специалист нумай çул Шетмĕпуçĕнчи ветеринари участокне ертсе пынă. Тăрăшулăхне шута илсе ăна та патшалăх наградисемпе чысланă. Чăваш АССРĕн ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне тĕрлĕ çулсенче Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе тата Чăваш АССРĕн Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

«Юратупа шанчăкшăн» ордена тивĕçнĕ ĕçчен те туслă мăшăр хĕр çуратса ӳстернĕ. Паян 2 мăнукпа 5 кĕçĕн мăнукĕсемшĕн пурнăç савăнăçĕ пулса тăраççĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Саламлатпăр

Муркашра пурăнакан юратнă аннене, ырă та уçă кăмăллă хунямана, ытарайми кукамая, ĕç ĕмĕрне сывлăх хуралне халалланă тăванăмăра – **Валентина Николаевна СЕРГЕЕВĂНА** юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ĕç ĕмĕрĕнче ырă сăмаха кăна тивĕç пулнишĕн, ыттисемпе пĕр чĕлхе тупма пултарнишĕн эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр, юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул, тулли телей, ăнăçу сунатпăр.



**Салампа: ывăлĕ, хĕрĕсем, кĕрĕвĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра – Елшик ялĕнче пурăнакан **Нина Егоровна ПОРФИРЬЕВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр! Вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Ăшă куллу санăн питӳ çинчен ан кайтăр, умра савăнăçлă кунсем пулччăр, чир-чĕр аякран иртсе çӳретĕр, ĕмĕтӳсем пурнăçланччăр.



**Юратса, хисеплесе, ырă сунса: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, йăмăкĕ çемйипе, пиччĕшĕсем çемйисемпе, тăванĕсем.**

Юратнă та хаклă çыннăмăра – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Раиса Николаевна ЕРШОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, çăл куç пек тапса тăракан вăйхал, телей, ăнăçу сунатпăр. Хастарлăху нихăçан та ан иксĕлтĕр, ĕмĕр сукмакĕ такăр та вăрăм пултăр.

**Саламлаканĕсем: çывăх тăванĕсем.**

Хĕвелтен те ăшăрах, ылтăн-кĕмĕлтен те хаклăрах, çĕр çинчи чи хисеплĕ те юратнă çыннăмăра – Оринин территори пайĕнчи Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Валерий Тарасович БАРАНОВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тулли телей, иксĕлми вăй-хăват, инçе çул пек вăрăм ĕмĕр, юрату сунатпăр. Санăн ялан хавас кăмăл пултăр, чун ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр. Ырă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра сан çунаттусем айĕнче канлĕх те ăнланулăх тупма пулăшнăшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити тайма пуç. Ачусемпе мăнукусемпе пĕрле тата нумай çул пурăнмалла пултăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр. Эсĕ пире питĕ кирлĕ. Турă малашне те упратăр сана.



**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 6 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

Пенсионерсен спартакиади

# Тивĕçлĕ канурисем активлăха ӳстereççĕ

Тĕрлĕ отрасльте сахал мар вăй хунă ĕçченсем çулсем иртнине пăхмасăрах хăйсен хастарлăхне çухатмаççĕ. Çакна пенсионерсен районти спартакиадин пĕрремĕш этапĕ те лайăх кăтартса пачĕ. Спортри хастарлăхпа тата вăхăтра хăйсем пурнăçланă ĕçĕпе паянхи ăрушăн вĕсем ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Спартакиадăн пĕрремĕш этапĕ иртнĕ эрнере виçĕ вырăнта иртрĕ: Çатракасси, Чуманкасси, Мăн Сĕнтĕр шкулĕсенче. Кашнинчех вăл е ку тăрăхри территори пайĕсенчи пенсионерсен пĕрлештернĕ командисем хутшăнчĕç. Спартакиадăн пĕрремĕш этапне пĕтĕмлетсе çапла калас килет: ĕçре ырă ятпа паларса тивĕçлĕ канăва тухнисем халĕ те пурнăç илемне курма пĕлеççĕ.

Паян кун йĕркинче сывă пурнăç йĕрки обществăшăн малти вырăна тухрĕ. Ăна яланхи ĕç туса хурассипе патшалăх органĕсем, обществăлла организацисем çанă тавăрсах ĕçлеççĕ. Кашниех общество пурнăçне, ыранхи кун аталанăвне хăйĕн тӳпине хывать. Округри пенсионерсем те юлашки çулсенче çак ырă пуçарурăн айккинче юлмаççĕ. Ăна çирĕплетсе вĕсем иртнĕ эрнере округ шайĕнчи спартакиада стартне тухрĕç.

Ăмăртусене Кашмаш шкулĕнче çул пачĕç. Çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕнче кунта 10-шар пенсионертан (5 арçынпа 5 хĕрарăм) тăракан 6 команда пухăнчĕ: Çатракасси, Оринин, Хорнуй, Муркаш, Ярапайкасси тата Шетмĕпуç территори округĕсенчен. Спорт ăмăртăвĕсене кашниех уяв пек йышăнни вĕсем ăна кĕтни пирки пĕлтерчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш ăмăрту кунĕсем çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнче тата 9-мĕшĕнче Чуманкассипе Мăн Сĕнтĕр шкулĕсенче иртрĕç.

– Тивĕçлĕ канăва тухнисене те манманни, вĕсене килте лартманни, пĕрле пухăнма сăлтав туса панине ырлатпăр. Кунта эпир тĕрлĕ сферăра пĕр вăхăтра ĕçленисене курса калаçатпăр, хамăра хумхантаракан ыйтусене сӳтсе яватпăр. Спорт вăйăйисене явăçса çамрăклăха аса илетпĕр, ватлăх пирки манатпăр. Тавах пире çавăн пек май туса панишĕн, – терĕç ăмăртăва Оринин тăрăхĕнчен килнĕ А. Бочкинпа Хорнуй территори пайĕн командине хутшăнакан А. Касьянов. Шалти ĕçсен пайĕнче тата вăрман хуçалăхĕнче нумай çул ĕçленĕскерсем паян та çулсем иртнине килĕшсе лармаççĕ, спортри хастарлăха çухатмаççĕ.

Спартакиадăна иртнĕ çулхи пекех Раççейри пенсионерсен пĕрлешĕвĕн районти уйрăмĕн ертӳçи Петр Скворцов йĕркеленĕ. Вăлах ертсе пычĕ. Ăмăртусене уçнă май Петр Алексеевич çакна палăртрĕ: «Иртнĕ çулхи спартакиадăна 13 команда 8-шер çынпа хутшăннă пулсан, кăçалхи ăмăртусене 14 команда 10-шар çынпа хутшăнма кăмăл турĕ. Çакă пенсионерсемшĕн канлĕ пурнăç кун йĕркинче пулманнине çирĕплетет. Ăна ăнланни спартакиадăна малашнехи çулсенче татах интереслĕрех тума хистет», – терĕ вăл ăмăртăва килнĕ командăсене ăнăçлă стартсемпе çĕнтерӳллĕ финиш сунса.

Старта хатĕрленнĕ командăсене саламланă май халăха социаллă пулăшупа тивĕçтерекен Муркашри центр ертӳçи О. Иванова асăннă спартакиада «Демографи» наци проекчĕн черетлĕ ĕçĕ пулнине палăртрĕ. Округ администрацийĕн физкультурăпа спорт секторĕн ертӳçи Е. Петров аслă ăру активлă пулни ветерансем сывă пурнăç йĕркине пăхăннине çирĕплетни çинче чарăнчĕ.

– Ăмăртура халăх йышлă. Апла пулсан сывă пурнăç йĕрки никамшăн та пушă сăмах мар. Ярапайкасси территори пайĕнче те чĕннисем ăмăртуран пăрănмарĕç. Пурте пĕр чăмăра пухăнса спартакиадăна килтĕмĕр. Паян хамăр ĕçленĕ вăхăтри юлташсене курса савăнатпăр, стартсем хушшинчи тĕл пулусенче тĕрлĕ ыйтăва сӳтсе яватпăр, – терĕ команда пуçлăхĕ Л. Пискарева. Нумай çул выльăх тухтăрĕнче ĕçленĕскер тивĕçлĕ канура та алă усса лармасть. Хăйĕн тăрăшулăхĕпе – çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх.



Спартакиадăна тухнă командăсем шашкăлла-шахматла выляссипе, пневматика винтовкинчен тĕл перессипе, 200 метр чупассипе, дартс вăййинче, комбинациллĕ эстафетăра вăй виçрĕç. Жюри тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн спартакиадăн 2-мĕш этапне 8 команда хутшăнма тивĕçрĕ: Çатракасси, Оринин, Шетмĕпуç, Муркаш, Чуманкассипе Уйкас Янасал, Мăн Сĕнтĕрпе Ильинка территори пайĕсем. Спартакиадăн 2-мĕш этапĕнче ăмăрту йĕркипе пенсионерсен шывра ишсе те вăй виçмелле пулĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: Петр Скворцов Муркаш командинчи Мария Васильевăна пневматика винтовкинчен тĕл перессипе çĕнтернĕшĕн чыслать.**

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ятарлă çар операцийĕ

# Укçа тӳлевĕпе тивĕçтереççĕ

Ятарлă çар операцине контракт мелĕпе хутшăнакансене тата хăйсен ирĕкĕпе кайнисене Чăваш Енре 50-шар пин тенкĕ тӳлевпе тивĕçтерĕç.

Кун пирки калакан Указа Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев алă пуснă.

Çак тӳлев пĕр хутчен паракан тӳлев шутланать. Ăна заявлени çырмасăрах тата нимĕнле хушма документ тăратмасăрах счет çине куçарса параççĕ.

Ку тӳлеве 2022 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа контракт çырса е хăй ирĕкĕпе ятарлă çар операцине хутшăнма тытăннисене параççĕ. Çавăн пекех ку тӳлевпе çак вăхăтра е çитес вăхăтра хăй ирĕкĕпе контракт çырса ятарлă çар операцине хутшăнакансене те тивĕçтереççĕ.

**Раççей Социаллă фончĕн Чăваш Енри управленийĕн пресс-служби.**

# Лайăх мар шăршă пĕтерме

Дерматолог, косметолог Татьяна Егорова тар шăршинчен мĕнле хăтăлмалли пирки каласа панă. Вăл палăртнă тăрăх, çынсенчен хăшĕсем кăшт кăна тата шăршăсăр тарлаççĕ, теприсем вара тар шăршипе аптăраççĕ.

Дерматолог тар шăрши хăçан тухнине сăнама сĕннĕ. Унăн шухăшĕпе енчен те лайăх мар шăршă тӳрех тухать пулсан, ку вăл эндокрин системин ĕçĕнче пăтăрмахсем пурри пирки калать. Кун пек чухне тухтăр патне кайса пăхас пулать.

Шăршă тӳрех тухмасть пулсан, алă айĕнчи хатĕрсемпе усă курмалла.

Чи малтанах Т. Егорова рационран ыхрана, тинĕс çимĕçĕсене, алкоголе, тĕтĕмленĕ тата шаритленĕ çимĕçсене кăларма сĕннĕ. Шăпах вĕсем лайăх мар тар шăрши кăлараççĕ.

Тар тухассин татах тепĕр «провокаторĕ» – стресс. Кун пек чухне кăмăл-туйăма йĕркене кĕртес пулать. Кунсăр пуçне пĕтнĕк тата пажитник вăрри тар тухнипе кĕрешме пулăшать.

Чи пĕлтерĕшли – харпăр хăйĕн гигиенине пăхăнни. «Душ час-часах йышăнăр. Çавна валли тĕрлĕ гельпе тата супăньпе усă курăр», – сĕннĕ специалист.

Вăл çирĕплетнĕ тăрăх, дезодорантсем шăршăна пĕтермеççĕ, ăна маскировкăлаççĕ кăна.

# Çичĕ стакан шыв ĕç

Çынсем час-часах шыв ĕçес килнипе пăшăрханнине илтме пулать. Çакă уйрăмах çулла сисĕнет. Ку вăл эсир апатçимĕçре мĕн ытларах усă курнипе те çыхăннă. Рационра аш-какай, сĕт, çăмартапа пулă, сыр е кăмпа ытлашшипех пулни сирĕн пӳрене чылай йывăрлăх кӳрет. Организмра белок ирĕлсе пĕтнĕ хыççăн юлнине (мочевина, шăк кислоти, азотлă шлак) шăкпа пĕрле кăларма сирĕн пӳрен çине тăрса ĕçлеме тивет. Çак ĕçе çăмăллатма, белок юлашкине вăхăтра ирĕлтерсе кăларма организма шыв нумайрах кирлĕ. Анчах шăкпа пĕрле усăллă минералсемпе витаминсем те чылай тухса кайнине манмалли çук.

Çӳлерех каланинчен çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать. Шыв час-часах питĕ ĕçес килни апат-çимĕçри белок шайне чакармаллине систерет. Кунта çакнашкал виçене пăхăнни вырăнлă. Арçынна талăксерен 70 – 120 грамм белокпа усă курни çителĕклĕ, спортпа туслисене – 150 грамм таран. Практика çакна çирĕплетет: белоклă çимĕç сахалрах çиме пуçласан, ăш хыппи иртет, шыв ĕçес режим та куç умĕнчех йĕркеленет.

Çакна асра тытмалла: çын мĕн чухлĕ сахалрах шыв ĕçет, чир таврашĕ çавăн чухлĕ йывăртарах иртет. Тĕслĕхрен, чул чирĕпе пиелонефрит организм тăтăшах шывсăрланса çитнипе пулма пултарать.

Сывă çыннăн кунне çичĕ стаканран кая мар шыв ĕçмелле. Ун чухлĕ ĕçме йывăр пулсан пĕчĕккĕн хăнăхса пыма тăрăшмалла – пӳре таса пулĕ, йывăрлăхсем те хăйсемех çухалĕç.

**Антонина ПЕТРОВА, терапевт.**

# Усăллă курăк

Пилеш тăрăллă курăк шăрши садри улмуççине грушăна ерекен хурт-кăпшанка хăвалать. Кукăстапа юнашар помидор лартни кукăста пăрçине хăратать. Йăран таврашĕнче хĕрен ӳсни лайăх, вăл хурткăпшанкă тăшманĕ шутланать. Горчицăпа пăрçана хутăштарса аксан вăл ăнса пулать. Çĕр çырли йăранĕ çумне çинче йĕрпе петрушка аксан çырлана улитка тапăнмасть. Пушă лаптăка сĕлĕ аксан тепĕр çул валли çĕр юсанать. Çĕр улми пуçтарса илсенех унта пăрça йышши культура аксан проволочник тарать.

# Тĕрĕслеве вăхăтра туса ирттермелле

Медицина профилактикин тĕрĕслевĕпе диспансеризаци вăхăтĕнче çыннăн сывлăхне тĕрлĕ енлĕ тĕрĕслеççĕ. Çакă чире вăхăтра тупса палăртма тата пулма пултаракан чирсене асăрхаттарма май парать.

Акă диспансеризацине хутшăнакан кашни çын тĕрлĕ анализ парать, вĕсем çыннăн сывлăхне хаклама кирлĕ. Сăмахран, тухтăрсем тĕрĕслеве пынă 40 – 64 çулсенчи çынсене икĕ çулта пĕрре, 65 çултан иртнисене кашни çулах «анализ кала на скрытую кровь» тесе çырнă направлени параççĕ. Çак анализа туни питĕ пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен вăл хулăн пыршăпа тӳрĕ пыршăн усал шыçă чирне тупса палăртма пулăшать.

Çыннăн каяшĕнче юн пурри усал шыçă пулма пултарассине кăтартать. Юн тӳрех палăрмасан та пултарать, çавăнпа та ку анализа вăхăтран вăхăта памалли йĕркене пăхăнмалла. Лабораторинчи тĕпчев вăхăтĕнче каяшра юн питĕ сахал пулсан та, ăна курма май пур. Çапла вара – чире малтанхи тапхăрта тупса палăртма та. Статистика палăртнă тăрăх хулăн пыршăпа тӳрĕ пыршăн усал шыçă чирĕ анлă сарăлнă усал шыçă чирĕсен списокĕнче виççĕмĕш вырăнта тăрать. Апла пулсан сывлăх çине алă сулмалла мар, чирсене тупса палăртма пулăшакан анализсене те вăхăтра памалла.

Çак анализа пама мĕнле хатĕрленмелле-ха? Ку анализа парас йĕрке апатланăва нимĕнле улшăну кĕртме те ыйтмасть. Çапах та икĕ эрне малтан юн шĕветекен эмел препарачĕсем (аспирин, ибупрофен), пыршăлăха çăмăлланма пулăшакан препаратсем йышăнма чарăнмалла, хырăмлăхпа пырșăсене суранлатма пултаракан процедурăсем (клизма, колоноскопи) тумалла мар.

Тĕрĕслеве памалли каяша нимĕн те: шыв та, шăк та, арлăх шĕвекĕ те, ытти те – лекмелле мар.

Каяша хумалли пĕчĕк контейнера стерилизацилемелле. Вăл хупăлчаллă пултăр – сывлăш лекмелле мар хупăнмалла. Каяша унитазран илмелле мар, ăна дезинфекциленĕ (вĕрилесе илнĕ) савăт-сапа çинчен илмелле.

Тимлĕ пулмалла – каяша шăк ан лектĕр. Савăтран илнĕ каяша контейнера (пĕрре виççĕмĕш пайĕнчен нумай мар) хумалла, хупăлчине пăрса лартмалла. Тепĕр самант çине те тимлĕх уйăрмалла: каяшăн пĕчĕк пайĕсене тĕрлĕ вырăнтан имелле, çакă тĕрĕсрех результат парать.

Контейнера упрамалла мар, ăна тӳрех лабораторине илсе каймалла. Çапах та çав вăхăтрах унта кайма май килмест пулсан, холодильникра 2 – 8 градус ăшăра виçĕ сехетрен ытла мар упрама юрать. Анализ тĕпчевне ытларах чухне 3 – 6 кунра туса ирттереççĕ.

Муркаш район тĕп больницинче каяшра юн пуррине палăртмалли анализа 212 кабинетра йышăнаççĕ. «Анализ кала на скрытую кровь» тесе çырнă направление вара медицина профилактикин 109 номерлĕ кабинетĕнче илме пулать.

Диспансеризаци тĕрĕслевне вăхăтра тухма тăрăшăр. Усал шыçă чирĕсене те, ытти чире те вăхăтра тупса палăртнине, асăрхаттарнине нимĕн те çитмест.

**Наталия ИСАЕВА, медицина профилактикин врачĕ.**

# Гаджет куçа сиенлет



Хальхи вăхăтра эпир планшетсăр, телефонсăр, компьютерсăр пурăнаймастпăр темелле. Ачасем аслисене кура калаçма вĕренничен гаджетсемпе интересленме пуçлаççĕ. Час-часах ашшĕ-амăшĕ хăйĕн валли ирĕклĕ вăхăт тупас тесе 1,5 – 2 çулхи ачине те телефон тыттарать. Çапла вара ача пĕчĕкренех телефона хăнăхать.

Ачана гаджетсăр пурăнайми тăвас мар тата гаджет сывлăх çине кӳрекен сиенлĕ витĕме чакарас тесен мĕн тумалла-ха?

Ашшĕ-амăшĕн çавна пĕлес пулать. Çуралнă хыççăн ачан куçĕ аталанма чарăнмасть. Унăн хăш-пĕр функцийĕ 13 – 14 çул тĕлнелле кăна йĕркеленсе çитет. Çавăнпа та ку тапхăрта асăннă органа аталанма оптималлă условисем туса пани питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.

Гаджет ача куçĕ çине сиен кӳнин тĕп сăлтавĕ – экран куçа питĕ çывăх пулни. Çавна пула аккомодацион аппарачĕн ытлашши вăй хурса ĕçлеме тивет. Пысăк мар экран, пĕчĕк саспаллисемпе цифрăсем, интереслĕ ӳкерчĕксен пĕчĕк пайĕсем – çаксем пĕтĕмпех куç тимлĕхне ӳстереççĕ.

Кунсăр пуçне сутă экран, экранăн кăвак çути, ӳкерчĕксен динамики паталоги процесĕсене пуçарма пултараççĕ.

Çавăнпа та сирĕн ачан пĕрремĕш класах куçлăхпа каймалла ан пултăр тесен, хăш-пĕр сĕнĕве пăхăнма тивет.

Хăвăрăн пепкене пĕрремĕш кунран тытăнсах смартфона хăнăхтарма кирлĕ мар. Ачан куç кураслăхне сыхласа хăварассипе чи лайăх та эффективлă май – 2 – 3 çула çитиччен пачах гаджет таврашне паманни.

Гаджетпа усă курма пуçăниччен çавна ача ăсне хывас пулать: унпа ашшĕ-амăшĕ ирĕк панипе кăна усă курма юрать.

Ачана куçпа экран хушшинчи дистанцие пăхăнма вĕрентмелле. Вăл 30 сантиметртан кая пулмалла мар. Гаджетпа усă курмалли вăхăта чикĕлес пулать. Мĕн чухлĕ сахалрах усă курать, çавăн чухлĕ лайăхрах. Çакă йĕркеленекен куç системи çине лекекен хăрушă витĕме чакарма май парĕ.

Сирĕн ача вăйă вылясшăн пулсан, çакна вăл смартфон çинче мар, стационарлă компьютер е ноутбук çинче тусан лайăхрах. Смартфонăн пĕчĕк экранĕ, ӳкерчĕксемпе сценăсем тăтăш улшăнса тăни, пысăк дисплейпа танлаштарсан, куçа ытларах сиен кӳреççĕ.

Ача валли гаджет туянатăр пулсан, май пур таран пысăкрах экранлине суйласа илме тăрăшăр, аппарат çинче пысăк шрифтпа иконкăсем вырнаçтарăр. Дисплей ытлашши çутă пулмалла мар. Çавăн пекех телефонпа вăйăсене тĕттĕм пӳлĕмре выляма кирлĕ мар.

Çулсем кайнă май ачана тĕрĕслесе тăма йывăрланать. Çавăнпа та ăна чи ансат правилăсене маларахах хăнăхтарас пулать: вăхăтран вăхăта тăхтавсем пулмалла тата куç валли ятарлă гимнастика ирттермелле. Çакна харпăр хăйĕн тĕслĕхĕпе хăнăхтарсан лайăхрах.

**Елена ЕГОРОВА, обществăлла сывлăхпа медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин республика центрĕн медицина профилактикин врачĕ.**

# Пирус туртма мĕнле пăрахмалла?

Ытларах чухне çынсем кампанишĕн, иртĕхнипе туртма тытăнаççĕ. Никам та хăйне сигаретсăр пурăнайми пулас тесе тĕллев лартмасть. Тепĕртак вăхăт иртсен кăна вăл хăй табаксăр пурăнайманнине ăнланса илет. Пирус туртасси кун йĕркине кĕрет. Малтанласа çакă ытлашши шухăшлаттармасть. Çулсем иртнĕ май вара кирек кам та пирус туртса хăйĕн сывлăхне сиен кӳнине тата укçа-тенкĕ ăссăрла пĕтернине ăнланса илет. Çавăн чухне вăл сиенлĕ хăнăхуран хăтăлма хăтланать. Анчах та çакă ниепле те çăмăллăн пулаймасть.

Пирус тĕтĕмĕнчен яланлăхах хăтăлас тесен мĕнрен пуçламалла?

Сиенлĕ йăлапа кĕрешме çирĕп тĕллев пулма тивĕç. Çакă вăл йывăр çул çинчи çул кăтартакан çăлтăр вырăнне пулĕ. Харпăр хăйĕн сывлăхне сыхласа хăварасси тата çирĕплетесси, вăраха пыракан чирсенчен хăтăлассии, хăйĕн ачисене хăрушă тĕтĕмрен тата сиенлĕ йăларан çăлса хăварасси – пур сăлтава та шута илни кирлĕ.

Сигарет туянма уйăхсерен мĕн чухлĕ укçа расхутланине шутласа пăхăр. Пĕр пачки вăтамран 150 тенкĕ тăрать пулсан, талăкра пĕр пачка туртса яратăр пулсан, уйăхра 4500 тенкĕ расхутланать, çулталăкра – 54000 тенкĕ. Пирус туртакан хăйĕн валли чирсене укçа тӳлесех пуçтарать.

Хăш кун пирус туртма пăрахассине малтанах планласа хума пулать. Анчах та çакна ытлашши кая ан хăварăр. Çакна уйрăмах паллă пĕр-пĕр кунпа çыхăнтарма пулать: Çĕнĕ çул, çуралнă кун е юбилей. Кун пек дата лайăхрах аса кĕрсе юлать. Енчен те эсир çак самантрах туртма пăрахма çирĕп йышăну турăр пулсан, тăхтаса тăма кирлĕ мар.

Хăвăра хăвăр сăмах парăр: туртма пăрахатăр пулсан, урăх пĕрре те пирус ĕмместĕр. Ку вăл питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ правило: «Пĕрре те ĕммелле мар!» Мĕншĕн тесен пĕрре ĕмни те эсир пысăк йывăрлăхпа çĕнтернине пĕтĕмпех аркатма пултарать.

Сирĕн умра пирус таврашĕ, зажигалка, кĕл чашăкĕ пачах ан пулчăр. Вĕсем сиенлĕ йăла пирки аса илтерме пултараççĕ.

Çывăх çынсене тата тăвансене хăвăр пирус туртма пăрахасси пирки йышăну турнине пĕлтерме тăрăшăр. Вĕсенчен пулăшу ыйтăр. Сирĕнпе пĕрле татах кам та пулин туртма пăрахма шут тытнă пулсан лайăх. Капла эсир пĕр-пĕрне пулăшма пултаратăр.

Май пур таран вăхăтлăха та пулин пирус туртакансенчен пăрăнма тăрăшăр. Уйрăмах вĕсем туртнă чухне е туртса яма пултараççĕ пулсан.

Пирус туртассипе çыхăннă самантсене улшăну кĕртĕр: ирхине кофе ĕçнĕ хыççăн, апатланнă хыççăн, автомобиль «пробкинче» пулнă чухне т. ыт. те. Çак самантсене епле ирттересси пирки малтанах шутласа хурăр. Малтанхи икĕ эрнере алкогольрен, кофеРен, йӳçек тата тăварлă çимĕçрен тытăнса тăрăр. Вĕсем пирус туртас килнине пуçарма пултараççĕ. Шĕвек нумайрах ĕçĕр – сĕткенсем тата минерал шывĕ. Пахча çимĕç тата улма-çырла ытларах çийĕр.

Чи йывăрри – çав тери туртас килнĕ чухне 5 – 10 минут чăтса ирттересси. Кун пек чухне урăх япала çине тимлĕх уйăрăр, упражненисем комплексне пурнăçлăр, шăл тасатăр, душ кĕрĕр. Лайăх мар туйăни малтанхи кунсенче çивĕчрех палăрать, каярахпа чакса пырать, пачах палăрми пулса тăрать.

Туртма пăрахасси – пĕлтерĕшлĕ утăм. Хăвăрăн тата хăвăр çемьен сывлăхне сыхлас тата упраса хăварас тетĕр пулсан, эсир ăна тума пултаратăр. Асра тытăр, малалла утакан кăна çула парăнтарĕ.

**Елена ЕГОРОВА, обществăлла сывлăхпа медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин республика центрĕн медицина профилактикин врачĕ.**

Сĕнӳ-канаш

# Бройлер какайĕ çиес тесен

Юлашки çулсенче ялсенче сысна тытакансем, мăйракаллă шултра выльăх ĕрчетекенсем сахалланчĕç. Çав вăхăтрах ял çыннисем паян кайăк-кĕшĕкпе ытларах интересленни сисĕнет. Çу кунĕсем çитнĕ май нумайăшĕ кăçал та тĕрлĕ ӳсĕмри бройлер чĕпписем туянма пуçларĕ. Ырламалла тăтăшах ыдравра пурăнакан ял çыннине. Анчах бройлера тупăшлă ӳстерес технологие пурте пĕлеççĕ-и? Ку ыйтура нумайăшĕн тĕплĕ хурав сахалрах пулнине шута илсе бройлер чĕппи пăхассипе калаçу пуçарас терĕмĕр. Мĕнле пăхмалла тин кăна туяннă бройлер чĕпписене, вĕсен рационĕнче хăш апат тĕп вырăнта пулмалла, чĕпсене епле йĕркене пăхăнса усрамалла, вĕсемпе ĕçленĕ чухне мĕн ытларах асра тытмалла?

Ялта пурăнакан хăйĕн килти хушма хуçалăхĕнче çулленех пахча çимĕçпе улма-çырла ытлă-çитлĕ туса илет. Ăна ĕне усрама, мăйракаллă шултра выльăх, качака, кролик, тĕрлĕ тĕслĕ кайăк-кĕшĕк ĕрчетме усă курать. Нумайăшĕ çак ĕçсене ăнăçлă пурнăçласа пырас тесе тата хăйсем суйласа илнĕ ĕçре патшалăх пулăшăвĕпе анлăн усă курас тĕллевпе паян хăй тĕллĕн ĕçлекенсем пулса регистрациленеççĕ. Çакă вырăнта ĕçлесех çемье бюджетне тĕреклетмелли çул пулса тăрать.

Килти хушма хуçалăх тытакансем юлашки вăхăтра тĕрлĕ тĕслĕ кайăк-кĕшĕк усрассипе тата ĕрчетессипе кăсăкланма пуçлани курăнать. Вĕсем хушшинче хăйсен тăрăшулăхĕпе чăх-чĕппе хур-кăвакал ĕрчетнипе пĕрлех бройлер чăхпа кăркка ӳстерекенсем те сахаллăн мар. Кашниех алă айĕнчи апатçимĕçпе усă курса чăх-чĕпрен çу кунĕсенче ытларах тупăш илес тĕллевпе вăй хурать.

Çу кунĕсенче килти хушма хуçалăхра бройлер чĕппи ӳстерме, чăнах та, йывăр мар: вăхăтра тата тĕрĕс апатлантармалла, çилтен хӳтĕлĕх туса памалла, умра çителĕклĕ шыв тытмалла, сывлăхне пăхса тăмалла.

Бройлерăн çамрăк чĕпписем тĕлĕшпе кил хуçин уйрăмах тимлĕ пулма тăрăшмалла. Вĕсене витĕр çил юраманнине асра тытăр. Çакна пĕлсе бройлер чĕпписем валли малтанхи вăхăтра хĕмаран е поликарбонатран ăсталанă вăхăтлăх «çурт» пулни аван шутланать. Ăна тăвасси вара пĕртте кăткăс ĕç мар. Алă айĕнчи материалсенчен тĕпсĕр ешчĕк ăсталамалла. Кун пек çурта симĕс курăк çинче вырăнтан вырăна куçарса лартма меллĕ. Çапла тусан чĕпсем симĕс курăка сăхкаласа хăйсене кирлĕ витамин çителĕклĕ пуçтараççĕ, пĕр-пĕрне ăнсăртран сăхса амантмаççĕ.

Ял çынни бройлер чĕппине ытларах чухне какайĕшĕн усрать. Çапла вара çăмарта тăвакан чăхсене ирĕке кăларса усăлса çӳреме ирĕк паратăр пулсан, какайăшăн çитĕнтерекеннисене ытларах читлĕхре тытни йăнăш пулмасть. Бройлер чĕпĕ ытлашши хускалма юратманнипе паллă. Шăпах çакă ăна хăвăртрах ӳт хушма пулăшать.

Пĕчĕк чухне бройлер чĕпписем хĕвел ăшшинче ăшăнса выртма юратаççĕ. Апла пулин те вĕсем ытлашши пăчăхсаран сулхăн кĕтес ăсталаса пани те кил хуçишĕн вырăнлă пулать. Шăрăх кунсенче бройлер чĕпписем тытакан читлĕхе йывăççем айне сулхăна вырнаçтармалла. Çумăрлă çанталăкра вĕсене хăвăрттăн хӳтте лартма меллĕ пулмаллине шута илĕр.

Ял çыннисем килти хушма хуçалăхра ĕрчетме ытларах чухне икĕ-виçĕ эрнери бройлер чĕпписене туянма тăрăшаççĕ. Эпĕ вара талăкрисем лайăххах тесе шухăшлатăп. Мĕншĕн тесен кăштах ӳстерсе сутакан чĕпсене хуçисем мĕн çитерсе усранине эпир пĕлсех каймастпăр. Талăкрисене апатлантарассине вара кил хуçи пуçласа хăй йĕркелет те вĕсен аталанăвĕ йăлтах куç умĕнче пулса пырать. Бройлер чĕпписене пĕчĕккĕ чухне епле пăхнинчен вĕсем малашлăхра мĕнле аталанасси тата епле ӳт хушасси нумай килет.

Кил хуçи бройлер чĕпписене малтанхи 10 талăкра сивĕрех çĕрте тытсан тата тĕрĕс мар апатлантарсан вĕсем хăвăрт ӳсеймен-нине палăртса хăваратăп. Çавăнпа та ку йĕркене бройлер чĕппи туянаканăн яланах тĕп вырăнта тытмалла.

Бройлер чĕпписен шăмă çирĕп пултăр тесен вĕсене кальци çителĕклĕ кирлĕ. Çак элемент çитменнипех вĕсем пĕр-пĕрне сăхма пуçлаççĕ. Кунашкал лару-тăруран вăхăтра пăрăнса иртме бройлер чĕпписен рационĕнче шăмă çăнăхĕ е пулă çителĕклĕ пулмалла. Шăнтса хунă йӳнĕ пулла вĕтетнĕ вĕлтĕренпе е ешĕл суханпа хутăштарса пани уйрăмах вырăнлă шутланать. Бройлер усраканăн чăхсенчен пысăк тухăç илес тесен маларах асăннă рациона çу каçипех пĕтермелли çук.

Кунсăр пуçне чĕпсене тĕрлĕ чир-чĕртен сиплемелли ятарлă препаратсене те кил хуçин яланах алă айĕнче тытмалла. Бройлер чĕпписем епле ӳснипе вырăнти выльăх тухтăрне паллаштарсах тăмалла. Пĕр тĕллевлĕ пулсан çеç кĕркунне сирĕн сĕтел çинче бройлер чăххин какайĕ тĕп вырăнта пулĕ.

**Г. СПАСКИН,**
**выльăх тухтăрĕ.**

# Çĕр улми çинчен

Ансат хăш-пĕр блюдăна вĕриллe çимесен тĕрĕсрех. Кун пирки нимĕççен **апатлану обществин диетологĕ Антье Галь** каласа панă.

Специалист палăртнă тăрăх, кăшт кăна ăшă блюдо пыршăлăх микрофлори çине лайăх витĕм кӳрет, юнри сахăр шайне виçере тытма тата ытлашши йывăрăшран хăтăлма май парать.

Антье Галь сĕнĕвĕсем çĕр улми, рис тата макарон изделийĕсем пирки. «Крахмаллă çимĕçре сивĕтнĕ хыççăн калорисен шучĕ чакать. Блюдăна хатĕрленĕ хыççăнах вара вăл самай ытларах», – палăртнă диетолог.

Специалист çавна асăннă. Резистентлă крахмал организмра хăйне клетчатка пек тытать. Вăл хулăн пыршăна ирĕлсе вакланмасăрах çитет. Кайран тин кунта активлă бактерисене пула ирĕлет. Çакă вара эпир çĕр улмине е риса сивĕлле çисен эффективлăрах пулса иртет.

Тухтăрсем çавна асăрхаттараççĕ. Пĕчĕкрех температурăра хатĕрленĕ çимĕçĕн усси ытларах (60 – 70 градусра пĕçерни тата духовкăра 100 – 120 градусра хатĕрлени). Çитменнине çимĕçе пĕр-икĕ минут та пулин пĕçерсе çитермесен лайăх. Кун пек çимĕçе йышăнма организмăн ытларах вăй расхутлама, апла пулсан ытларах калори пĕтерме тивет. Кун пирки хăйĕн Telegram-каналĕнче эндокринолог, медицина наукисен докторĕ Зухра Павлова асăннă.



# Квас мĕнпе усăллă?

Квас вăйсăр алкоголь напиткĕ шутланать, ăна квас чусти йӳçĕтнипе хатĕрлеççĕ. Напиток çирĕплĕхĕ 2,6-на çитеймест. Халăхсем хушшинчи классификаципе квас сăрасен категорине кĕрет, Раççейпе Украинăра вара ăна хăйне тĕллĕн напиток тесе палăртнă. Квас кашни кун ĕçсен организмпа мĕн пулассине каласа кăтартăпăр.

